Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1938 ИЙУН 26 ВЫРСАРНИКУН 145 (4958) №

Чăваш Коммунĕ

21-мĕш çул тухать — ПСК(б)П Чăваш Обкомĕпе Тĕпĕçтăвкомăн хаçачĕ — Пĕр №-рĕ 10 пус

РЕДАКЦИПЕ КАНТУР АДРЕСĕ: Город Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом Печати

ТЕЛЕФОНСЕМ: Редакторăн 0—67, Ред. заместителĕн 0—88, Редакци секретарĕн 4—40, Дежурнăйăн 6—23

Пайан РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлав кунĕ

ПУРТЕ СУЙЛАВА!

„Çитес суйлавсем вĕсем, йулташсем, ахаль суйлавсем çеç мар. Вăл чăннипех пирĕн рабочисен, пирĕн хресченсен, пирĕн интеллигенцин пĕтĕм халăх уйавĕ. Тĕнчере çавăн пек чăннипех ирĕклĕ, чăннипех демократилĕ суйлавсем нихăçан та пулман-ха, нихăçан та! Истори ун пек пример урăх пĕлмест. Ĕç кунта пирĕн суйлавсем пурне те тивĕç, пĕртан, вăрттăн, тӳррĕмĕн пулассинче мар,—ку хăйех те ĕнтĕ пит те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ĕç кунта пирĕн пурне те тивĕç суйлавсене тĕнчери кирек хăш çĕршыври суйлавсемпе танлаштарсан та, вĕсенчен ытларах ирĕклĕ, ытларах демократилĕ иртерниче" **И. СТАЛИН.**

Пурте пĕр çын пек тухар

Пайанхи кун Чăваш халăх историне ĕмĕр манми чаплă кун пулса кĕрет. Пайан, 1917 çулти Октябĕрте ирĕке тухнă Чăваш халăхĕ, тĕнчери чи демократилĕ Конституци тăрăх, Сталинла Конституци тăрăх влаçăн аслă органне — Чăваш АССР Верховнăй Советне суйлать, çавăн пекех тата вăл пайан Российă федерацине кĕрекен автономлă республикăсемпе автономлă облаçсенчи, крайсемпе облаçсенчи пĕтĕм халăхсемпе пĕрле РСФСР Верховнăй Советне суйлать.

Пайан Чăваш халăхĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне пĕтĕм халăхсемпе нацисен пирвайхи кандидатне — Иосиф Виссарионăвич Сталина—пирвайхи депутата суйлать. Йепле савăнас мар, йепле хĕпĕртес мар пайан пирĕн, Чăваш халăхĕн, Сталин йулташ пире çакăн пек пысăк чыс тунăщăн!

Сталин йулташпа пĕрле пайан Чăваш халăхĕ влаçăн аслă органне — Чăваш АССР Верховнăй Советне—Совет правительстви пуçлăхне Молăтăв йулташа, партипе правительствă руководителĕсене— Калинин, Каганович, Ворошилăв, Андрейĕв, Микойан, Жданăв, Йежов йулташсене суйлать.

Çавăн пекех Чăваш халăхĕ Чăваш АССР Верховнăй Советне рабочи класпа хресченсем, совет интеллигенцийĕ хушшинчен тухнă совет патриочĕсене— Ленин—Сталин парти ĕçĕшĕн пĕтĕм вайне парса ĕçлеме пултарнине кăтартнă уйхир стаханăвцисене, ударникĕсене суйлать.

Сталин йулташ тата партипе правительствăн руководителĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшнипе хавхаланнă Чăваш халăхĕ Верховнăй Советсен суйлавне социалисăм строительствин пур участкисенче те ĕнтерӳсем тунипе тухать.

Халăхăн савăнăçĕ пысăк. Савăнма вăл тивĕçлĕ. Чăнахах та, мĕн пулнă-ха пирĕн, чăвашсен, ĕлĕкхи саманара, тата халĕ мĕнле пулса тăтăмăр епĕр? Чухăн, мĕскĕн, вăйсăр, куљтурсăр пулнă ĕлĕкхи саманара чăваш çĕршывĕ, чăваш халăхĕ. Вăл нихçан та тăраниччен çăкăр çисе курман. Унăн йăрансем хушшине çĕтĕк саплăк пек хĕсĕнсе ларнă анасем çинчен туса илнĕ тырпулне куланай укçишĕн сутса пĕтермеле пулнă. Ачи-пăчи выçă ларнă, çĕтĕк çӳренĕ. Чăвашăн мĕн пур апачĕ те—çĕрулми, çăмах йашки, ĕне усракаланă пулсан — уйран пулнă. Урăх апат курайман вăл. Хĕллехи сивĕсенче çĕтĕк сăкманпа ĕнтĕрхесе çӳренĕ. Выçă, вăйсăр, тумтирсĕр пулнă пирки, каçа хирĕç çула тухсан, çур çухрăм хушшинчех аташса вилнĕ. Çаксене аса илсен ӳçпуç виреле тăрать. Анчах ĕлĕкхи чăнлăх çапла пулнă. Вăл пурнăç Чăваш халăхĕшĕн халĕ ĕмĕрлĕхех иртрĕ. Пайан вăл тулли пурнăçпа пурăнать. Колхоз стройĕ ăна пуйан та куљтурăлă пурнăç кӳчĕ. Акă мĕншĕн пайан Чăваш халăхĕ бољшевиксен партийĕшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлать.

Ĕлĕк чăваш хушшинче ĕмĕр тăрăшĕнче хăйсен йалĕнчи пускартинчен инçете тухса курманнисем те нумай пулнă. Çитсен çитнĕ Çĕрпӳве, нумай кайсан—Хусана, йе Чĕмпĕре. Анчах çакăн пек „вăрăм" çула тухсан та унăн сахал мар мăшкăл тӳсме тивнĕ. Вырăсран хăранă вăл, тутартан хăранă. Пуринчен ытла патша чиновниксенчен хăранă. Пур çĕрте те кулнă унтан. „Фаççил Ифанч" тенĕ ăна, çăпатапа çӳренĕрен „лык да мочало" тесе тăрăхланă. Халĕ чăвашĕ те, тутарĕ те, мари те, мордва та—пурте пĕр çемйери пек пĕр шухăшлă пулса вырăс халăхĕ йертсе пынипе социалисăм тăваççĕ. Нацисем хушшинчи хирĕçӳсем ĕмĕрлĕхех пĕтнĕ. Акă мĕншĕн пайан чăваш халăхĕ бољшевиксен партийĕшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлать.

Ĕлĕк хĕрарăм шутра пулман. Килйышра хĕр çуралсан, вăл ашшĕ-амăшĕшĕн инкек кăна пулнă. Хĕрарăма йат çĕрĕ тухман.

Халĕ арçын та, хĕрарăм та пĕр, тан. Çĕрпе пĕр пек уса кураççĕ. Ĕçлев, вĕреӳ, кану, ĕçлейми пулсан пулăшу прави— пурин те пĕр пек. Акă мĕншĕн пайан чăваш халăхĕ бољшевиксен партийĕшĕн, коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлать.

Пурнăç лайăхланчĕ. Пурăнма савăнăçлă пулчĕ. Çаксене пире пурне те Ленин—Сталин партийĕ туса пачĕ. Çавăнпа та епĕр коммуниссен партишĕн сасăлатпăр.

Граждăн вăрçи чарăннăранпа тĕнчен ултăмĕш пайĕнчи халăха Совет правительствипе коммуниссен партин, аслă Сталинăн аслă политикĕ вунçиччĕмĕш çул ĕнтĕ лăпкă саманара пурăнма май пачĕ. Акă мĕншĕн пайан епĕр Сталиншăн, унăн соратникĕсемшĕн, вăл çитĕнтернĕ совет патриочĕсемшĕн сасăлатпăр.

Тăшмансем—фашисăмăн троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла агĕнчĕсем Октябĕрте кĕрешсе илнисене пирĕнтен пĕтĕмпех кайала туртса илме сахал мар тапăçланчĕç. Вĕсем хапрăксемпе савăтсене ĕлĕкхи фабрикантсемпе заводчиксене тавăрса парасшăн пулчĕç, вĕсем çĕрпе вăрмансене улпутсемпе кулаксене тавăрса парасшĕн пулчĕç, вĕсем çĕршыври пуйанлăхсене йутçĕршыв капиталисĕсене тавăрса парасшăн пулчĕç. Вĕсен ĕçĕ тухаймарĕ. Совет чекисĕсем тăшмансен тискер ĕмĕчĕсене вăхăтра сиссе татрĕç. Пĕтĕм халăх çăмăллăн сывласа йачĕ. Акă мĕншĕн пайан пĕтĕм халăх пĕр шухăшлă пулса суйлава тухать.

Сывă пултăр коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ!

Сывă пултăр Аслă Сойузри халăхсен тăванла туслăхĕ!

Сывă пултăр Аслă Сталин!

Халăхсен праçникĕ

Ийунĕн 24-мĕшĕнче Азербайджан, Киргиз, Узбек, Таджик, Туркмен тата Казах СС Республикисен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕсем калама çук пысăк çĕкленӳпе иртнĕ.

Азербайджан СС Республикĕ

Вилĕмсĕр Ленинăн йачĕпе тăракан нефть кăларакан чи пысăк район—ордĕнлă Азербайджанăн столици—Баку йаланхинчен иртерех вăраннă. Пайан Ленински районĕнчи нефтаниксем аслă Сталина Азербайджан СС Республикĕн Верховнăй Советне суйлаççĕ.

... Суйлавçăсен малтанхи ушкăнĕсем куљтурă дворецне—суйлав участкине пынă чухне тул та çутăлса çитмен-ха. Пуринчен малтан сасăламали хисеплĕ правăна 74 çулхи пенçионер Константин Байбакăв илнĕ. Ун хыççăн бӳллетене Арменак Манукйан монторпа унăн арăмĕ Рипсиме Хачатурăвнă йараççĕ.

Суйлавçăсем вĕçĕмсĕр пыра-пыра кĕреççĕ.

Куљтурă дворецĕ умĕнче—ташлакансен ушкăнĕсем. Нацилĕ инструмĕнтсем чарăнма пĕлмесĕр музыкă шăрантараççĕ.

Кировабадски—Хапрăк суйлав округĕнчи 2-мĕш номĕрлĕ участкăра (Кировабад хули) çамрăксем кашни суйлавçăнах хисеплĕн кĕтсе илессине организациленĕ. Ирхине ирех унта 110 çулхи Машади Вели Раджабли пынă. Вăл хăйне йĕри-тавра хупăрласа тăракан суйлавçăсене патша семанинче патша чиновникĕсем, бексемпе хансем Азербайджан халăхне йепле тискеррĕн асаплантарни çинчен, бољшевикла парти тата аслă Сталин ĕççыннисене туса пана çĕнĕ телемлĕ пурнăç çинчен каласа панă.

Киргиз СС Республикĕ

Фрунзе хулинчи 16-мĕш номĕрлĕ суйлав округĕнчи участкăсене праçник чухнехи пек илемлетсе тухнă, унта Киргиз СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма Сталин йулташ килĕшӳ панă. 4 сехет çĕрле. Урамсем тăрăх суйлавçăсен колоннисем пыраççĕ те ĕнтĕ. Вĕсем аслă çулпуçĕн илемлетнĕ портречĕсене хаваслăн йатса пыраççĕ.

Виççĕмĕш суйлав участки. Участкăра суйлав комиççии председателĕ суйлав пуçланни çинчен пĕлтерет. Тăваллăн алă çупнисем йанраса кайаççĕ, музыкă пролетарилĕ гимн шăрантарать.

Ватă рабочи Слабиньак йулташ хăйĕн суйлав бӳллетенне суйлав урнине пысăккăн хавасланса йарать. Пĕрремĕш номĕрлĕ суйлав участкинче сукна хăмрăкĕнчи стаханăвкă— Киргизири паллă аљпинистка Болкунова бӳллетене суйлав урнине чи малтан йарать.

Суйлавçăсем пĕрин хыççăн тепри пыраççĕ.

Чалдоварти Калинин йачĕпе тăракан колхозăн тăваттăмĕш бригади суйлав участкине музыкăпа, хаваслă йурăсем йурласа пырса кĕнĕ. Виççĕмĕш участкăра звеньевой Фроçă Çидăрăвă колхозницă бӳллетене суйлав урнине йарса, çапла каланă.

— Епĕ хамăн сасăма аслă Сталинăн çывăх соратникĕшĕн, Калинин йултшăн панипе телейлĕ. Епĕ ăна кăçал кашни гектартан пиншер центнĕр хĕрлĕ кăшман туса илме сăмах паратăп.

(Йулашки 4-мĕш страницăра).

Атăл тăрăхĕнче

Самодержави вăхăтĕнче Атăл тăрăхĕнчи тата Урал çывăхĕнчи халăхсене помещиксемпе купцасем тискеррĕн експлоатациленĕ. Патша администрацийĕ кунти халăхсене пĕр чарусăр пусмăрланă. Простой тийек те пулин пусмăрта мĕскĕнленнĕ „урăх йăх çыннин" сехрине хăпартнă.

Хресченсем хăйсен питех те сахал çĕрĕсем çинче выçлăн-тутлăн пурăннă. Хресченсем промысласенче кунне 15—18 сехет хушши ĕçлесе 20—25-шер пус кăна илнĕ.

Патша правительстви çав куљтурăсăрлăха „урăх йăх çыннисем" пурăнакан районсенче йурийех туса пынă. Жандармăсен корпусĕн 5-мĕш участкин начаљникĕ 1-мĕш Микулай патне йанă çекретлă çырура çапла çырнă: „Пур вăхăтсенчи опытсем те çакна кăтартса параççĕ: пачах куљтурăсăр халăха тыткалама кăштах çутта тухнă халăха тыткалассинчен çăмăлтарах. Çак правилă тăрăх чăвашсене пăхăнтарса тăракан пуçлăхсем чăвашсем хушшинчи куљтурăсăрлăха малашне те сарса пыма мĕн пур вăйпа пулăшаççĕ". Патша жандармă ĕçесене ырланă. Хусан кĕпĕрнинче халăха çутта кăларас ĕçе йанă тăкаксем çултăлăк хушшинче пĕр çын пуçне 13,4 пус çеç тивнĕ. Унта пурăнакан халăхсенчен 90 проценчĕ—хута пĕлменнисем пулнă.

Анчах патша Российĕн хуçисем чиркӳсем лартас тĕлĕшпе тимсĕр пулман вара. Мордва тăрăхĕнче 3 пин чиркӳ, 14 мăнастир пулнă. Пĕр Шупашкар хулинче кăна (халь Чăваш республикĕн столици) 5 пин халăх пурăннă çĕрте пурĕ 14 чиркӳ пулнă. XX-мĕш ĕмĕрччен Шупашкарта почтă та пулман.

Çуклăхпа, правасăрлăхпа, куљтурăсăрлăхпа, медицинă пулăшуне курмасăр асапланса пурăннипе халăхсем хушшинче тĕрлĕрен чирчĕрсем сарăлнă. Чăваш, мари, удмурт халăхĕсем куç чирĕпе—трахомăпа чирлесе пурăнна. Чăваш çĕршывĕнче пурăнакан халăх 80 проценчĕ—трахомăпа чирленисем пулнă. Çав чиртен суккăр пулса ларнисем кунта 10 пин çын шутланнă—Шупашкар хулинче ун чухне пурăннă халăхран икĕ хут нумайтарах! Атăл тăрăхĕнчи халăхсем вилсе пĕтес патнех çитсе тăнă.

Халĕ ĕнтĕ çав халăхсем, вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынипе, Совет çĕршывĕнче телейлĕ пурнăç тăваççĕ.

Революци çулĕсенче Атăл тăрăхĕнчи республикăсен сăн-сăпачĕ паллама çук улшăнса çĕнелчĕ. Пур республикăсенче те йăвăр промышленнăç тунă: Башкир республикĕн столицинче — Уфара моторсем тăвакан савăт тата Черника патĕнче йăвăç савăчĕ тунă; Тутар республикĕн столицинче— Хусанта синтетически каучук, çыракан машинăсем тăвакан савăтсем, Сойузра чи пысăк меховой комбинат тунă. Чăваш республикĕнче Çĕмĕрлепе Куславкара йăвăç комбиначĕсем туса лартнă. Канашра вагунсем йусакан савăт тунă.

Патша вăхăтĕнче Атăл тăрăхĕнчи вак халăхсене вак-тĕвек ĕç кăна тутарнă. Халĕ башкирсенчен, тутарсенчен, чăвашсенчен, марийецсенчен, удмуртсенчен, мордвасенчен тухнă инженерсемпе маçтăрсем, врачсемпе учителсем, агрономсемпе артиссем çĕршерĕн те пиншерĕн шутланаççĕ.

Атăл тăрăхĕнчи республикăсем йалхуçалăх тĕлĕшпе те пысăк çитĕнӳсем турĕç. Колхозсемпе совхоз хирĕсенче пиншер трактăрсемпе комбайнсем ĕçлеççĕ.

Революци çулĕсенче Мари АСС Республикĕн столицине — Йошкар-Ола хулине пырса кĕрекен чукунçула тунă. Чăваш республикĕн столицине—Шупашкар хулине пырса кĕрекен чукунçула туса пĕтереççĕ.

Пур республикăсенче те пурне те хута вĕрентес ĕçе йĕркеленĕ. Аслă шкулсем, ăслăлăхпа тĕпчев институчĕсем нумай тунă.

Çĕнĕ Шелтем йалĕнче (Чăваш республикĕ) 1900 çулта приход шкулĕнчен пуçласа пĕр çын вĕренсе тухнă. Революци çулĕсенче Çĕнĕ Шелтĕмре чухăнсемпе вăтам хресчен ачисенчен 10 учитĕл, ветеринари врачĕ, çĕрйĕркелекен, горнăй инженер, художник, командирсем, шофĕрсем, тракториссем нумай пулса тухнă.

Революциччен башкир, мордва, мари, удмурт, чăваш чĕлхисемпе пĕр хаçат та тухман. Халљхи вăхăтра хăйсен тăван чĕлхисемпе вуншар хаçат, çĕршер кĕнекесем кăлараççĕ. Вĕсенчен талантлă писателсем ӳсреç, марксисăм класcикĕсен произведенийĕсене тата вырăс литературипе тĕнчери литературăн чи лайăх произведенийĕсене тăван чĕлхе çине куçарнă.

Çак калама çук чаплă çитĕнӳсене аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшса пынипе тунă.

(„Спутник агитатора", журналра тухнă статйаран, ийуљ, № 11).

РСФСР Государствă гербĕ

ЧАССР Государствă гербĕ

Коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми блок кандидачĕсемшĕн сасăлăр!

Ватă суйлавçăсем мĕн калаççĕ

ТРАК. (Телефон тăрăх). Çырмапуç Карайĕнчи „Хĕрлĕ Çăлтăр“ колхоз колхозникĕ, 100 çула çитнĕ Игнатий Афанасьев сирĕн корреспондента çакăн пек калаçа пачĕ:

— 100 çула çитрĕм ĕнтĕ. 80 çул асаплă, хĕнхурлă пулчĕ. Епĕ сахал мар йăварлăх тӳссе ирттернĕ. 10 çул хушши Хусанти тир-сăран савăт хуçи патĕнче ĕçлесе пурăнтăм. 11 çул хушши Турци вăрçинче пултăм. Ывăлăм Платон империалисăм вăрçинчен аманса килсен вилчĕ.

Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе телейлĕ пурнăç турăмăр. Епĕ 100 çулхи старик, хаклă Сталина чĕререн тав таватăп, ăна кăмăлтан мухтатăп, вăл пире татах та телейлĕ пурнăç патне илсе пырать.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче ирпе ирех суйлав участкине пырса, хамăр суйлав округĕнчи пĕтĕм халăх тăратнă кандидатсемшĕн, Дубавпа Йефремăв йулташсемшĕн сасăлатăп.

В. Васильев.

**

ТАВАЙ, ийунĕн 24-мĕш, (телефонпа, хамăр корр.). Сăкăтпуç йалĕнчи утмăл çулхи колхозник Йакăвлĕв Терентей —хăйĕн ĕмринче пурнăç тутине курнă çын. Унăн ашшĕ çамрăкран пуçласа куçĕ хупăначченех ырă кун курайман. Унăн килкартинче чăх та какаламан. Терентей мучине ашшĕнчен хивре пĕтĕрсе йавнă чăпăркка кăна йулнă. Вăл Сăкăтпуç таврашĕнчи уй-хирсенче 22 çул хушши кĕтӳ кĕтнĕ.

1914 çулта тĕнчере империалисăм вăрçи пуçлансан, тăван килйышĕнчен уйăрăлакан çынсем:

Пире патша вăрçа кĕтет пуль

Саккун арчи çине тайăнса,— тесе йурланă. Çавăн чухне, Терентей мучи те тăрăх шинел тăхăнса окопсенче çӳренĕ.

Терентей мучин чăн-чăн пурнăçĕ Аслă Октябĕр революцийе пĕрле пуçланнă. Унăн йун тапса тăракан çамрăклăхĕ çĕнĕрен таврăннă.

Терентей мучи ийунĕн 26-мĕшне пĕтĕм чунтан хĕпĕртесе кĕтет. Ирхине 6 сехетрех суйлав çуртне кайма хатĕрленет. Вăл çапла калаçса парать:

— Совет влаçĕ пире телейлĕ те савăнăçлă пурнăç пани çинчен калама сăмах та çитеймест. Епĕ ĕлĕк, каччă чухне урамра çараураи çӳреттĕм. Хальхи каччăсем, йурăра йурланă пекех, таканлă атăсемпе çӳреççĕ. Манăн ывăл 12 çул ытла кĕтӳ кĕтнĕ. Пирĕн Совет влаçĕ ăна вĕренме пулăшрĕ. Халь вăл льотчик пулса ĕçлет, тăван çĕршывăн чиккисене сыхлать. Хамăн пурнăçа илсен, унта Сталин йулташ пирĕн çĕршыва мухтавлăн йертсе пыни куçкĕски çинчи пекех курăнса тăрать. Ĕлĕк карта йупи те пулман, халь манăн икĕ ĕне. Йулашкинчен епĕ çакна каласшăн: Аслă Ленинпа Сталин ĕçĕсем пурăннă чухне пире никам та çĕнтерес çук! Хĕвел хăçан сӳнме пултарĕ? Нихăçан та! Ленинпа Сталин ĕçĕсем те çаплах. РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене депутата халăх ĕçне, парти ĕçне паранна çынсене суйлани —тĕреслĕхшĕн кĕрешни пулать. Тĕреслĕх тимĕр татать, теççĕ. Тĕреслĕх фашисăма та çĕмĕрсе такĕ.

Халăх хăй телейĕшĕн сасăлать

Телейлĕ те савăнăçлă пурăнаççĕ пирĕн совет çамрăкĕсем. Вĕсем тăван çĕршывăн çутă хĕвелĕн айшинче ӳссе чечекленеççĕ. Совет халăхĕ хăйĕн çамрăкĕсене йуратать. Коммуниссен парти тата аслă Сталин çамрăксен пуçарулăхĕпе пултарулăхне йаланах тивĕçлипе хаклаççĕ, çамрăксен малашлăхĕ çине пысăк шанчăк хураççĕ. Çавăнпа та епĕр, совет çамрăкĕсем, тăван çĕршыва йурататпăр.

Епĕ Октябĕр тантăшĕ, Ленин—Сталин партийĕ вĕрентсе, пăхса ӳстерекен темиçе çĕр пин совет çамрăкĕсенчен пĕри. Мана парти, тăван çĕршыв пăхса ӳстернĕ. Хамăрăн социалисăмлă тăван çĕршывшăн, унăн ырлăхĕпе хăвачĕшĕн пĕтĕм вăйран тăрăшса ĕçлетĕп. Çав ĕçре мухтава тухса епĕ халăхăн çав тери пысăк шанчăкне илме тивĕçлĕ пултăм.

Пайан пĕтĕм халăх праçникĕнче манăн пурнăçра ĕмĕрлĕхе аса йулмали икĕ пысăк савăнăç. Пайан епĕ суйлав йешчĕкĕ умне кайса Чăваш АССР Верховнăй Советне хамăр пурнăçри чи хаклишĕн, чи аслишĕн, пире телейлĕ те савăнăçлă çамрăклăх туса паракан аслă Сталиншăн сасăлатăп. Пирĕн Канашри савăт суйлав округĕнчи суйлавçăсен аллисенче Сталин йатне çырнă бӳллетен пулать, вĕсем пурте уншăн сасăлама хатĕр. Сталин йулташшăн сасăланинчен хакли пирĕншĕн урăх нимĕн те çук.

Манăн тепĕр пысăк савăнăç вăл — Канаш суйлав округĕнчи суйлавçăсем РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата тăратни. Пайан ку округри суйлавçăсем манăн йата çырнă бӳллетене илеççĕ, вĕсем маншăн сасăлаççĕ. Çак савăнăçсем çинчен каласа пама сăмах та çитмест. Епĕ çапла калатăп: халăх шанăçне илесси пысăк та пархатарлă чыс. Вăл пирĕншĕн хакларан та хакли. Çавăнпа та епĕ пĕтĕм вăйа, кирлĕ пулсан, пурнăçа та халăх ĕçĕшĕн, ĕççыннисен телейĕшĕн паратăп. Коммуниссен парти тата аслă Сталин кăтартса пыракан çул çинчен пĕр утăм пăрăнмасăр, тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пырса, хамăрăн суйлавçăсен шанчăкне ĕçре кăтартма пулатăп.

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама Канаш суйлав округĕнче регистрациленĕ кандидат
Йекатеринă Антонăвă.

Молотăвпа Калининă йулташсемшĕн сасăлатăп

Ийунĕн 26-мĕш кунĕ—пĕтĕм халăх уйавĕ.

Епĕ ийунĕн 26-мĕшĕнче ССРС Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕшĕн, Сталин йулташ соратникĕшĕн Молăтăв йулташшăн тата Шупашкар хула совечĕн председателĕшĕн, коммуниссен партин тĕрĕс хĕрĕшĕн Калинкинă йулташшăн сасăлатăп. Вĕсем коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсем.

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи стахановец
Çемен Куçмин.

Чаплă çĕнтерӳпе кĕтсе илтĕмĕр

ВĂРНАР, ийунĕн 25-мĕшĕ (телефон тăрăх). Вăрнарти фосфорит савăтĕнчи рабочисем Çавалкасси суйлав округĕнчен Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата ССР Сойузĕн Верховнăй Совет президиумĕн председателне — М. И. Калинин йулташа, РСФСР Верховăй Советне депутата Дубăв йулташа суйлама хатĕрленсе тăраççĕ.

Суйлава хатĕрленнĕ май, рабочисем савăтăн ийунь уйăхĕн планне суйлав кунĕ тĕлне тултарма обиазательства илнĕччĕ. Ийунĕн 24-мĕш тĕлне 6393 тоннă руда кăларса, рабочисем çав обиазательствăна срукчен малтан пурнăçа кĕртрĕç.

Социалисăмлă ăмăртăва анлăн сарса пынă май, стахановецсен йышĕ хытă ӳсрĕ. Халĕ савăтра 109 стахановец. Йегорăв, Павлăв йулташсем хăйсен куллевхи ĕç нормине 253 процент, Çергейĕв—237, Чекмарĕв 200 процент ытла тултарса пыраççĕ.

Савăт технорукĕ—инженер
МЕДУКОВ.

ВĂРНАР, (телефон тăрăх). Калинин йулташа кандидата тăратнă Çавалкасси суйлав округне кĕрекен суйлавçăсем суйлав кунне пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Михаил Иванăвич Калинин йулташшăн сасăлама тивĕçлĕ пулнишĕн вĕсем мухтанса савăнаççĕ.

Йалсенчи урамсем пĕр ерне ытла ĕнтĕ уйав тумĕпе капăрланса тăраççĕ. Ийунĕн 22-мĕшĕнче пулнă суйлав умĕнхи пуху калама çук çĕкленӳпе иртрĕ. Халиччен ун пек пысăк пуху пулмине Çавалкассинчи ĕççыннисем астумаççĕ. Ку пухура халăхăн организацилĕхĕ пысăкки уççăн палăрчĕ.

Колхозсем çуртырисене çĕр процентĕпех çумласа, тасатса çитерни. Йалхуçалăх машинисене йусанă. Пур колхозсенче те гектартан 120 пăтран кайа мар тырă туса илетпĕр, теççĕ.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче Çавалкас суйлав округĕнчи суйлавçăсем халăхăн чи шанчăклă ывăлĕшĕн—Калинин йулташшăн сасăлаççĕ.

Усли Васлейĕ.

Телейлĕ пурнăçшăн!

Епĕ Сталин саманинче телейлĕ ӳсрĕм. Епĕр, çамрăксем, атте-аннесен ĕлĕкхи пурнăçне хут урлă çеç пĕлетпĕр пулин те, патшан тискер йĕрки халăхсене мĕнле хĕнхур кăтартнине аванах чухлатпăр.

Халăх тăшманĕсем—троцкиссемпе бухаринĕцсем тата фашиссем Совет Сойузĕнче капиталисăм йеркине кайала таврассишĕн тăрмашаççĕ. Анчах вăл нихăçан та пулмĕ! Мĕншĕн тесен пире Ленин—Сталин партийĕ йертсе пырать.

Пирĕн парти тата унăн çулпуçĕ Сталин йулташ тăван çĕршыва хура çăхансенчен сыхлама алла хĕçпăшал тытса тухма чĕнсен, епĕр, ирĕклĕ Совет çĕршывĕн патриоткисем, тăшмана хирĕç пурте пĕр харăс тухăпăр!

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан тир-сăран савăтĕнчи стахановка
П. Скачковă.

Н. И. Шелепи

Салам суйлавçăсене!

Пайанхи кун—суйлав кун
Чаплă уйав тăватпăр,
Пайан Аслă Совета
Депутатсем суйлатпăр.

Орденлă республикăн
Хаваслă суйлавçисем,
Суйлав кунĕ йачĕпе
Хĕрӳ салам, йулташсем!

Çĕнтерӳлĕ, паттăрсем,
Ĕç халăхĕн геройсем,—
Салам паттăр колхозниксем,
Салам стахановецсем!

Професăрсем, вĕрентекенсем—
Çутта кăларакансем,
Сталинла суйлавпалан
Коммунисăмла салам!

Хĕрлĕ йалав йалкăштарса
Хĕрӳ çĕнтерекенсем—
Салам паттăр большевиксем!
Салам комсомолецсем!

Пĕтĕм тĕнче ĕçхалăхĕн
Мухтавлă патшалăхĕн
Вутлă-хĕмлĕ хурçă крепĕç—
Салам паттăр Хĕрлĕ Çар!

Ленинисăм чечекĕсем,
Октăберĕн ачисем,
Çутă кун-çул ывăл-хĕрĕсем—
Хĕрӳ салам çамрăксем!

И. Д. ПАПАНИН
РСФСР Верховнăй Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав комиссин председателĕн заместителĕ.

Коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми блокĕ

1937 çулти декабĕрĕн 12-мĕш кунĕ пирĕн çĕршыв историнче ĕмĕрлĕхех совет çĕршывĕнчи нумай нацилĕ халăхăн пĕрлĕхĕпе пĕтĕçĕвĕн ырă памиатникĕ пулса йулĕ.

Çав историлĕ кун 99 мĕлйуна йахăн совет граждăнĕсем коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасă панă.

Суйлавçăсем урнăсем патне çавăн пек пурте кар пынине, пурте пĕр шухăшлă пулса сасăланине истори вăл вăхăтчен пĕлмен. Капиталисăмлă çĕршывсенчи буржуалă пичетĕн те: халăх çавăн пек пĕр шухăшлă пулса сасăлани, Совет Сойузĕнчисĕр пуçне, урăх нихăш çĕршывра та пулма пултараймасть, тесе йышăнмала килнĕ.

Йулашки кунсенче коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блокĕ çирĕппи, вăл нихăçан та çĕмĕрĕлес çукки тата тепĕр хут курăнчĕ. Грузи тата Армени Верховнăй Совечĕсен ийунĕн 12-мĕшĕнче пулса иртнĕ суйлавĕсем—пĕтĕм халăх праçникĕ, ленинла-сталинла наци политики çĕнтернин чаплă уйавĕ пулса тăчĕç. Грузире суйлав прави пур пĕтĕм граждăнсенчен 99,2 проценчĕ сасăланă. Арменире суйлав прави пур пĕтĕм граждăнсенчен 99,06 проценчĕ сасăланă.

— Икĕ республикăра сасăлама хутшăннисенчен 99,6 проценчĕ коммунинссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăланă. Тбилисире 296.770 суйлавçăран сасăлама 296.510 çын хутшăннă, вăл пĕтĕм суйлавçăсенчен 99,9 процент пулать; çапла 300.000 йахăн суйлавçăран мĕн пурĕ те 260 суйлавçă çеç сасăлама пыман.

Çакăн пек политикăлă пит пысăк активлăх тĕнчери тата хăш çĕршывра пулма пултарĕ?!

ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕсем умĕн темиçе кун малтан, 1937 çулхи декабĕрĕн 7-мĕшĕнче Пĕтĕм Сойузри Коммуниссен (большевиксен) Парти Тĕп Комитечĕ пĕтĕм суйлавçăсене — рабочисене, работницăсене, хресченсемпе хресчен хĕрарăмĕсене, Хĕрлĕ Çара, совет интеллигенцине чĕнсе каланине пичетлĕсе кăларнă. Большевиксен партин çав калама çук хаклă документĕнче большевиксен партийĕ вăл ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕнче партире тăман рабочисемпе, хресченсемпе, служăшчисемпе, интеллигенципе блокра, сойузра пулать, тесе каланă. Парти Тĕп Комитечĕ пур коммуниссене тата партире тăманнисене çак блокăн кандидачĕсемшĕн сасăлама чĕннĕ.

Епĕр, тăватă польарник, вăл вăхăтра тăван çĕршывран инçетре, центăрти польар бассейнинче куçса çӳрекен пăр çинче пурăнаттăмăрччĕ. Анчах епĕр хамăра тăван çĕршывран уйрăм туймастăмăрччĕ. Çав кунсенче епĕр, польарти çĕрлехи тĕттĕмре пулсан та, совет çĕршывĕн йун тымарри тапнине туйса тăраттăмăр. Епĕр тăватсăмăрта пире Верховнăй Совет депутатне тăратнине тивĕçлĕ пултăмăр. Суйлавçăсем пирĕн пата вĕçĕмренех саламлă телеграммăсем йăрăччĕç, епĕр ответ пама аран-аран ĕлкĕрсе пыраттăмăр. Епĕр тăр пĕччен пулман. Епĕр пĕтĕм çĕршывпа пĕр шухăшпа, пĕр туйăмпа пурăннă, унпа пĕрле савăннă. Пирĕн пата парти Тĕп Комитечĕ чĕнсе калани çитсессĕн, епĕр—çак историлĕ документ, Сталинла Конституци пекех, пурнăçра пуррине, совет халăхĕн моральлĕ-политикăлă пĕрлĕхне пула пулса тăнăскерне çырса хунине ăнланса илтĕмĕр.

* * *

Октăберти социалисăмлă аслă революцишĕн кĕрешӳре „пуласа пынă та ĕнтĕ коммуниссемпе партире тăман рабочисен тата хресченсен сойузĕ. Большевиксем Октăбĕр революцийĕн пур тапхăрĕсенче те рабочисемпе хресченсен сойузне тĕреклетессишĕн, хуларипе йалти партире тăман ĕççыннисен пĕтĕм массине парти тавра пĕтĕçтерессишĕн кĕрешнĕ. Октăбĕрĕн мĕн пур тата пур тĕрлĕ тăшманĕсене хирĕç пынă кĕрешӳре коммуниссем партире тăман рабочисемпе, хресченсемпе, интеллигенципе тунă çав сойуз туптанса пынă“ (Молăтăв).

Социалисăмлă строительствă ĕçĕсене пит пысăккăн туса пынипе кивĕ Российăра, кайа йулнă, культурăсăр, ĕççыннисем правасăр пулна çĕршывран, малта пыракан, культурлă та хăватлă социалисăмлă державă пулса тăчĕ.

Совет халăхĕ пирĕн тăван çĕршыв малашне те хăватлă, культурăлă тата ирĕклĕ социалисăмлă державă пултăр тесе тăрăшать. Çавăнпа вăл коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăлать.

Коммуниссен партийĕ йертсе пынипе пирĕн халăх капиталиссемпе помешчиксен влаçне çавăрса çапрĕ, експлоататăрла класçене тĕп турĕ, çынна çын експлоатациленине пĕтерчĕ. Производствă орудийĕсемпе средствисем социалисăмлă харпăрлăх пулни—совет обшчĕствин çирĕп никĕсĕ пулса тăчĕ.

Совет Сойузĕнчи ĕççыннисем кивви таврăнса килессине хирĕç, çавăнпа вĕсем коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлаççĕ.

Коммуниссен партийĕ йертсе пынипе хамăр çĕршывра социалисăм çĕнтерӳне тунă. Социалисăм çĕнтернине пула промышленнăç тата йалхуçалăхĕ чечекленсе ӳсрĕç. Пирĕн хапрăксемпе савăтсем вăрçăччĕнхи виçерен 8 хут нумайрах продукци тӳса кăлараççĕ. Пирĕн колхозсемпе совхозсем сталинла вăйлă тырпул туса илеççĕ. Çĕре трактăрсемпе, комбайнсемпе, йалхуçалăхĕнчи тата ытти вĕрçĕнĕ машинăсемпе ĕçлеççĕ.

Рабочисемпе колхозниксем—пирĕн промышленнăç малашне те хăвăрт ӳссе пырса, капиталисăмлă çĕршывсенчен мала иртсе, пирĕн колхозсемпе совхозсем малашне те чечекленсе ӳссе пычăр, пирĕн çĕршыва ирĕккĕн тыткаламалăх йулхуçалăх çимĕçĕсем пачăр, тесе тăрăшаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ ССР Сойузĕнчи ĕççыннисем хăйсен сассисене коммуниссемпе партире тăманнисен никам çĕнтерейми блок кандидачĕсемшĕн параççĕ.

Пирĕн çĕршывра социалисăм çĕнтерни ĕççыннисен пурнăçне пит нумай лайăхлатрĕ, вĕсен культурине çӳле çĕклерĕ. ССР Сойузĕ—ĕç сĕрлĕхе пĕтерне, ĕççыннисем çуклăхран хăтăлнă, ыранхи куншăн иккĕленессине тата çуклăха пĕтернĕ пĕртенпĕр çĕршыв. ССР Сойузĕ—хресченсем чухăнлăхпа çуклăхран хăтăлнă, вĕсене пуйан та культурăлă пурăнма май кӳрсе панă пĕртенпĕр çĕршыв. ССР Сойузĕ—граждăнсем пурте ĕçлев, канăç, вĕренӳ, ватăлсан пурăнмалăх пулăшу илмели правасемпе усă куракан пĕртенпĕр çĕршыв.

Пирĕн çĕршыври ĕççыннисем хăйсен пурнăçне тата ытларах лайăхлатма, культурине хăпартма, тата телейлĕрех те пуйанрах пурăнма тăрăшаççĕ. Çавăнпа ĕнтĕ вĕсем пурте пĕр шухăшлă пулса коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлаççĕ.

Патша Российĕнче хĕрарăм чура пулнă. Совет влаçĕ, коммуниссен парти йертсе пынипе, хĕрарăма социалисăмлă обшчĕствăн ирĕклĕ те тулли правалă строителĕ, арçынпа алла-алăн тытăнса хамăрăн государствăна тытса тăракан пулмала турĕ.

Совет халăхĕ пирĕн хĕрарăмсем малашне те хуçалăхпа управленин пур ĕçĕсенче те ирĕклĕ те тулли правалă граждăнсем пулччăр, тесе тăрăшать, çавăнпа халăх коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн, большевиксен партийĕшĕн сасăлать.

Совет Сойузĕ—халăхсем туслă пурăнакан çĕршыв; нацилĕ пусмăрлăхпа танмарлăха, халăхсем пĕрпĕрине шанманнине ĕмĕрлĕхех пĕтернĕ, халăхсем пĕрпĕрине шанса тăванлă сойузра, туслă ĕçлесе пурăнаççĕ.

Совет Сойузĕнчи халăхсем малашне те ирĕклĕ те пĕртан правалă пулма, халăхсен аслă туслăхне çирĕплетсе пыма тăрăшаççĕ. Çав туслăх пур чухне совет государствине никам та тулашри тата шалти тăшмансем те — хăрушă мар. Çавăнпа та ĕнтĕ Совет Сойузĕнчи халăхсем пурте пĕр шухăшлă пулса коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлаççĕ.

ССР Сойузĕ капиталисăмлă йĕри-тавралăхра пурăнать. Шалти тăшмансем сахал йышлă тата вăйсăр пулсан, вĕсен хутне кĕрекен тулашри тăшмансем пирĕн тăван çĕршывĕн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн пысăк хăрушлăх пулса тăраççĕ. Тăшмансем пирĕн çĕршыва шпионсене, сăтăрçăсене, диверсантсене йарса тăраççĕ, тăшмансем ССР Сойузĕ çине тапăнма хатĕрленеççĕ. Совет влаçĕ, коммуниссен партийĕ йертсе пынипе, шанчăклă ĕçлекен карательнăй органсем турĕ, вĕсем шпионсене, диверсантсене, сăтăрçăсене пĕтерсе пыраççĕ. Совет çĕршывĕн хăватлă, лайăх хĕçпăшалланнă Хĕрлĕ Çар пур, вăл хамăрăн çĕршыва

Сывă пултăр аслă Совет Сойузĕнчи халăхсен никам çĕмĕрейми сталинла туслăхĕ!

Сталин йулташ суйланакан округ

Халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ ЧАССР Верховнăй Советне суйланма пирĕн Канаш савăт суйлав округĕ тăрăх баллотировкăна тăрсан, епĕр хамăра нихçанхи пек мар телейлĕ, хаваслă, савăнăçлă туйса илтĕмĕр. Сталин йулташ кандидатурине округри суйлав комиççинче регистрациленĕ кун пирĕншĕн пысăк та чаплă уйав пулса тăчĕ. Аслă çулпуçĕн йачĕ рабочисен ĕçри хастарлăхне вăйлăн çĕклерĕ.

Сталин—вăл пирĕншĕн чи çывăх, чи тăван йат. Сталин йулташ Ленинăн аслă ĕçне малала тĕрĕс те шанчăклăн туса пырса, пире, Совет Сойузĕнчи çĕрçитмĕл мĕлйунлă халăха, телейлĕ, хаваслă, çутă пурнăç пачĕ. Ĕлĕкхи саманара икĕ хутлă пусмăрта асапланнă чăваш халăхĕ халĕ бољшевиксен партийĕ, унăн çулпуçĕ Сталин йулташ çĕкленĕ социалисăм хĕвелĕ айĕнче, мĕн пур Сойузри халăхсемпе пĕрлех пĕр тан правалă халăх пулса тăчĕ. Улшăнса çĕнелчĕ çутçанталăк, çĕнелчĕç чăваш çĕрĕсем, вĕсем пире тĕлĕнмеле пуйанлăх пара пуçларĕç.

Кашни çĕнтерӳре, Сталин индустриализацийĕ пана кашни машинăн хăватлă кĕрлевĕнче, демонстрацисене тухакан рабочисен кашни йурринче, пирĕн тулли уйхирсенче ӳсекен кашни тутă пучахра, кашни колхозникăн телей çинчен калакан сăмахĕнче пĕр аслă йат—Сталин йачĕ илтĕнет.

Ку аслă йата Канашри вакунсем йусакан савăтри рабочисем халĕ суйлав умĕн хăйсен чĕрисенче уйрăмах ăшшăн туйса тăраççĕ.

Суйлав умĕнхи производствăлă поход савăта пысăк çĕнтерӳсем пачĕ. Тăшмансем сăтăрласа хăварнă пирки халиччен кайа йулса пынă цехсем ура çине тăчĕç. Çĕкленчĕ рабочисен политикăлă активлăхĕ, бољшевикла агитаци ĕçĕ анлăн сарăлчĕ.

РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама савăтри çамрăк стахановкă Антонăвă йулташ кандидатурине, ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама Сталин йулташ кандидатурине регистрациленĕ кун савăтри мĕн пур цехсенче хăватлă митингсем пулса иртрĕç. Митингсенче 1.500 ытла суйлавçă пулчĕ. Уйрăмăн килхуçи хĕрарăмсен, çамрăксен пухăвĕсем пулчĕç. Савăтри чи лайăх стахановецсем, агитатăрсем, килхуçи хĕрарăмсем радио умне тухса, чăваш халăхĕн пĕрремĕш кандидачĕ Сталин йулташ çинчен, савăтри пĕтĕм рабочисем йуратакан Антонăвă йулташ çинчен каласа пачĕç.

Канаш савăт суйлав округĕнче пĕтĕмпе 180 агитатăр ĕçлет, вĕсене уйрăм агит-пунктсем, уйрăм килсем çумне çирĕплетнĕ. Политикăлă агитаци ĕçне савăтри парти комитечĕ йертсе пырать. Партком агитатăрсемпе мĕн пурĕ 14 семинар туса ирттернĕ. Мĕн пур цехсенче, хĕрлĕ кĕтессенче, общежитисенче агитпунктсем тунă. Агитпунктсене лайăх илемлетнĕ. Вĕсем валљи литература 2.100 екземпљар, плакатсем, картăсем, лозунгсем 950 тенкĕлĕх илнĕ.

Савăтри нумай тиражлă „Вагонник" хаçатсăр пуçне, суйлав йачĕпе цехсенче 26 номĕр стена хаçачĕ кăларнă.

РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне хатĕрленес ĕç иртнĕ суйлавринчен нумай лайăхрах, йĕркелĕрех пулса пычĕ. Чăн та, Канаш хула совечĕ суйлавçăсен списокĕсене тăвас ĕç çине ку рăсра та çийелтенрех пăхрĕ. Анчах пирĕн суйлав участкисем спискăсене тĕрĕслесе тӳрлетес тĕлĕшпе хытă ĕçлерĕç. Халĕ енте епĕр суйлава пысăк йĕркелĕхпе кĕретпĕр.

Суйлав участкисене, сасăламали пӳлĕмсене лайăх йĕркеленĕ, илемлетнĕ.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче пирĕн Канаш савăт суйлав округĕнчи суйлавçăсем суйлава пурте пĕр кăмăллăн тухса, хăйсен сассисене халăхсен аслă çулпуç Сталин йулташшăн, савăтри чаплă стахановкă Антонăвă йулташшăн параççĕ.

ЧАССР Верховнăй Советне суйламали Канаш савăт суйлав округ комиççийĕн председателĕ

КИСЉАКОВ.

Суйлав участкинче

РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Шупашкар хулинчи пур суйлав участкисем те суйлавçăсене кĕтсе илме хатĕрленсе çитрĕç.

Ийунĕн 26-мĕшĕнче суйлавçăсем таса та илемлĕ участкăсене пырса социалисăмлă çĕршыва татах та вăйлатассишĕн, çирĕплетессишĕн, телейлĕ те савăнăçлă пурнăçшăн чунтан-чĕререн парăнса ĕçлекен йулташсене—Верховнăй Советсен депутачĕсене суйлама палăртнă кандидатсемшĕн сасăлаççĕ.

9-мĕш номĕрлĕ суйлав участкинче (суйлав комиççи председателĕ Таврин йул.) суйлавçăсен кану вăхăтне куљтурлă ирттерес тĕлĕшпе пур ĕççене туса çитернĕ. Физкуљтурă плошчаткинче волейбол тата ытти массăлă вăйăсем организациленĕ. Буфет, шашкă-шахмăтла, биллиардла выљăмали, ташламали тата кĕнеке-хаçат вуламали пӳлĕмсене йĕркеленĕ. Çавăнтах тата ачасен пӳлĕмĕ, малтанхи пулăшу паракан пӳлĕм, унтах тухтăр пулать. Вата суйлавçăсене суйлав участкине сасăлама илсе пыма хула совечĕ икĕ грузовик, икĕ çăмăл автомашинă тата пĕр лаша уйăрнă.

Участкăра пĕтĕмпе 12 кабинă. Пурне те вĕсене йĕркеленĕ, таса. Кашни кабинăра икĕ кăрандаш, ваткă, шыв пулать. Сĕтел çинче чечексем лараççĕ. Суйлавçă кабинăран тухсан хирĕçле пӳлĕме кĕрет. Ку пӳлĕмре суйлав йешчĕкĕсем лараççĕ.

9-мĕш суйлав участки суйлава лайăх хатĕрленни, хатĕрленӳ ĕçне малтанах тĕрĕс организацилесе туса пынинчен килнĕ. Суйлав учаскинче 65 çын ытла активиссем ĕçленĕ.

7-мĕш суйлав участкинче те кану вăхăтне лайăх организацилеççĕ. Кĕнеке-хаçат вуламали, биллиардла, шашкă-шахмăтла выљамали тата пĕчĕк ачасен пӳлĕмĕсем, буфет пур,—пурне те вĕсене картинсемпе, плакатсемпе илемлетнĕ т. ыт. те.

Хар. Лисин.
Тр. Майорăв.

Нестĕр Йанкас

П А Й А Н

Çĕршывăм! Санăн шăпчăку пулас тесе,
Мухтавлă Сталина савса йурлас тесе,

Шырать поет çак чаплă кун чи ăшă сăмахсем,
Шырать хаваслă пурнăçа тивлетлĕ сăмахсем.

Аванçке пурăнма! Аванçке йурлама!
Вĕç, вĕç Мускава, хăлат пек, йуррăм ман!

Çĕршывăмран салам илсе çитер ес Сталина,
Мĕнпур çĕршыв тăван атте тесе чĕнет ăна.

Вăл—пирĕн пурнăçа телейлĕ тăвакан,
Мĕн пур халăхсене тăванлантаракан,

Хурçă алпа тăшмансене аркатакан,
Хăватлă çĕршыва куллен вăйлатакан.

Вăл—пирĕн савăнăç, вăл—пурнăç, вăл—хăват!
Вăл пирĕн малтанхи чи хаклă кандидат.

Мĕнпур çĕршыв депутата суйлать ăна,
Мĕнпур çĕршыв чунтан савать ăна.

Йурла, поет! Йанрат ес уççăн йурруна!
Мĕнпур çĕршыв савса йурлать хаљ Сталина.

Вăл—пирĕн ăшă çут хĕвел! Ун ăшшинче
Ӳсет пуйан çĕршывăм ман чечекленсе.

Чăпарланса выртан Казах кавирĕ пек
Кашлать ак йешĕл хир ылттăн тырăсемпе.

Мăнаçлăн мĕшлесе çӳреççĕ варсенче
Упа пек йокширсем, çĕмел пек ĕнесем.

Выљаççĕ амăшĕсемпе сиккелесе
Каракуљ-путексем, вĕшле пек тыхасем...

Вĕри хĕр пичĕ пек илемлĕн хĕрелсе
Колхоз сачĕсенче пиçеççĕ улмасем...

Шатрун çуртсем çинче йурлаççĕ чĕкеçсем,
Чийе пахчисенче йурлаççĕ шăпчăксем...

Хăва пек каччӑсем, хуракăш пек хĕрсем,
Çырла пухма хунав çăкалăха кĕрсе,

Йурлаççĕ:—Çун савни, килсем, килсем! тесе,
Йурлаççĕ:—пурăнма хаваслăçке! тесе.

Ахах пек çутă аслă Атăл хĕрринче
Мăнаçлăн çĕкленсе шавлаççĕ савăтсем..

Çӳлте-çӳлте—çап-çут сенкер тӳпе çинче
Хăлат пек йаранса вĕçеç самољотсем...

Пурçăн хăйу пек çутă хурçă çулпала
Чупать, васкать ак пуйăс Шупашкарала...

Ата, васка, тăван çĕршыв! Çитес çĕре
Чи аслă Машинист йертсе пырать пире!

Вăл пирĕн малтанхи чи хаклă кандидат.
Вăл—пирĕн савăнăç, вăл—пурнăç, вăл—хăват!

Вăл—пирĕн ылттăн сар хĕвел! Ун ăшшинче
Усет телейлĕ пурнăç чечекленсе.

Аванçке пурăнма! Аванçке йурлама!
Çăлкуçĕ пек йантрат, поет, ес йурруна!

Чечеклĕ çĕршыва ăшăтакан хĕвелшĕн—
Иосиф Сталиншăн, ун çывăх тусĕсемшĕн,

Тăван çĕршывăн паттăр ывăл-хĕрĕсемшĕн,
Илемлĕ пурнăçшăн, телейлĕ кунçулсемшĕн

Пайан йаратпăр епĕр бӳллетенсене,
Пайан паратпăр епĕр хамăр сассене;

Мухтав етемлĕхĕн чи аслă çулпуçне!
Мухтав епĕр суйланă депутатсене!

Суйлавçăсен савăнăçĕ

КУСЛАВККА. (Хамăр корр.). РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали кун çывхарнă май, Куславкка районĕнчи колхозсенче колхозниксен пухăвĕсем питĕ хаваслăн, пысăк çĕкленӳпе пулса иртеççĕ. Колхозниксен пухăвĕсем совет халăхĕ коммуниссен аслă партийĕ тавра, халăхсен йуратнă çулпуçĕ Сталин йулташ тавра нихçанхинчен те тача пĕтĕçсе тăнине кăтартакан хăватлă демонстрацисем пулса тăраççĕ. Колхозниксен пухăвĕсем коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ çирĕппине, ăна никам та çĕмĕрме пултарайманнине кăтартаççĕ.

Ийунĕн 23-мĕшĕнче, Варасăрти „Правда" колхоз пахчине, Тĕмшер, Пилешкасси, Варасăр йалĕсенчи колхозниксемпе колхозницăсем 600 çын ытла пуханнă. Суйлавçăсем—ирĕклĕ çĕршыври ирĕклĕ граждăнсем—бољшевиксен парти ĕçĕшĕн, Ленин—Сталин ĕçĕшĕн йаланах пĕтĕм вăйа хурса кĕрешме хатĕр тăнине, ийунĕн 26-мĕшĕнче коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн сасăлама хатĕрленсе çитнине кăтартма пуханнă.

Çĕрпӳ суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ З. А. Андрейĕвă йулташ, Йелчĕк суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама регистрациленĕ Г. И. Иванов йулташ сăмах тухса каланă хыççăн, колхозниксем пĕрин хыççăн тепри сăмах калама пуçларĕç. Колхозниксем Чăваш халăхĕ халăхсен çулпуçĕ Сталин йулташ, рабочисемпе хресченсен правитĕлствин пуçлăхĕ Молăтăв йулташ, тата партипе правитĕлствăн ытти руководителĕсем Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйланма килĕшӳ панишĕн чĕререн савăннине, хавасланнине кăтартаççĕ.

Ватă колхозник, патша саманинчи хура-шура тӳссе курнă, сталинла саманари телейлĕ пурнăçпа пурăнакан Федăр Александрăвич Чердаков йулташ çулăмлă сăмах каларĕ.

— Епĕ,—тет вăл,—тата манпа пĕрле пирĕн колхозниксем мĕнле савăннине каласа пама епĕ сăмах тупса çитерейместĕп. Шутлăр-ха, йулташсем, епĕр хамăрăн социалисăмлă государствăри влаçăн аслă оргăнĕсене çӳлтен пуçласа айала çитиччен хамăр суйлатпăр! Епĕр коммуниссемпе пĕрле пулса тăратнă кандидатсем хамăр пата килсе калаçаççĕ, вĕрентеççĕ. Совет влаçĕ пулман пулсан, епĕр, ĕççыннисем, çакна курма пултарнă-и, çакнашкал историлĕ çĕнтерӳсем тума пултарнă-и? Çук! Бољшевиксен парти, Ленин тата Сталин йулташсем йертсе пынипе совет халăхĕ капиталиссене, улпутсене, харампырсене, кулаксене, пур йышши тăшмансене çĕнтерме пултарчĕ. Çавăнпа та пирĕн коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ Сталин пек çирĕп.

Ĕлĕк, патша саманинче, влаçра тăнă етемсем, пирĕн, ĕççыннисен йунне ĕçнĕ, вĕсем пирĕн тăшман пулнă. Халĕ епĕр халăхран тухнă, парти ĕçĕшĕн, халăх ĕçĕшĕн тăрăшакан хамăр йулташсене влаçăн аслă оргăнĕсене суйлатпăр. Çавăнпа та епĕ суйлавçăсен йачĕпе РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйланакан йулташсене акă мĕн каласшăн: есĕр, халăх суйланă депутатсем пулатăр, совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатасшăн, хамăрăн социалисăмлă государствăн вăй-хăватне тĕреклетессишĕн, халăх тăшманĕсене—троцкисла-бухаринла, буржуалă-националисла бандăсене хирĕç, сăтăрçăсене хирĕç тата вăйлă кĕрешĕр, ку ĕçре пире пулăшăр, вĕрентĕр. (Аллă çупаççĕ).

Аманикри „Динамо" колхоз колхозникĕсемпе колхозницисем хăйсен Илйич лампăчкисемпе çуталса ларакан илемлĕ клубне 400 çын, ваттисем те çамрăккисем те пуханнă.

Колхозниксем хăйсен колхозĕн çитĕнĕвĕсемпе çĕнтерĕвĕсен примерĕсем тăрăх, Совет Сойузĕн, Чăваш АССР-ĕн социалисăм строительствинчи историлĕ çитĕнĕвĕсене йар уççăн кăтартса параççĕ.

Колхозниксен пухăвĕсем „Динамо" колхозра та, „Правда" колхозра та ийунĕн 26-мĕшĕнче пурте пĕр шухăшлă пулса РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ тăратнă кандидатсемшĕн сасăлама пулчĕç.

Суйлав умĕнхи ăмăртура

Деткомиççин Шупашкарти хапрăкĕ (директăрĕ Трофимăв йулташ) çурçул плăнне ийунĕн 20-мĕшĕ тĕлне 138,7 процент, Сĕнтĕрвăрринчи пичке-катка савăчĕ (директăрĕ Лукин йулташ) 132,9 процент тултарнă. Ку ӳсĕмсене социалисăмлă ăмăртупа стахановла йухăма вăйлатса пынипе, производствă ĕçне çирĕп план тăрăх йĕркеленипе тунă.

А. С.

К. К. Вастрӳк йулташ суйлавçăсем патĕнче

КАНАШ. (Хамăр корр.). Ийунĕн 22-мĕшĕнче Асхва йалĕнче суйлавçăсен 600 çынлă митингĕ пулса иртрĕ. Суйлавçăсем Каракла суйлав округĕнчен ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидатпа — ЧАССР Шалти суту-илӳ Халăх Комиссарĕпе К. К. Вастрӳк йулташпа тĕл пулчĕç. Митингра доверĕннăйсем, суйлавçăсем тата К. К. Вастрӳк йулташ сăмах каларĕç.

К. К. Вастрӳк йулташ сăмахĕнчен

Йулташсем! Чăваш республикĕнчи ĕççыннисем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйлама пысăк хаваслăхпа хатĕрленеççĕ. Епĕ Каракла суйлав округĕнчи йалсенче çӳресе стариксем, çамрăксем, хĕрарăмсем, хĕрсем каланă сăмахсене нумай итлерĕм. Пурте вĕсем Ленин—Сталин аслă партине, ĕççыннисен çулпуçне Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратни çинчен кăвар пек вĕри сăмахсем калаççĕ.

Есĕр мана Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама кандидата палăртрăр. Çапла епĕ сирĕн кандидат,—епĕ мана хамăр республикăра суту-илӳ ĕçне йертсе пыма шанса пана çын.

Сире шантарса калатăп—халăхăн шанăçне тивĕçлĕ пулма, халăх ĕçлĕхĕн тарçи пулма, суйлавçăсен интересĕсене пурнăçа кĕртсе пыма, ленинла-сталинла сăнарлă государствă дейателĕ пулма пĕтĕм чĕререн тăрăшăп.

Пирĕн Чăваш республикĕнче те суту-илӳ ĕçĕ пĕрмайах ӳссе пырать. 1937 çулта Чăваш республикĕнче тĕрлĕ таварсене ваккан 280 мĕлйун тенкĕлĕх сутнă, 1938 çулта 324 мĕлйун тенкĕлĕх сутмала. Суту-илӳ работникĕсен хисеплĕ ĕçĕ—çак таварсене халăха вăхăтра тата чи лайăх çитерсе парасси, убыткăсăр суту-илӳ тăвасси пулса тăрать.

Халăх тăшманĕсем, халăха кӳрентерес тесе, суту-илӳ ĕçне пăсса йама сăтăрласа пынă пулнă. Вĕсене çĕмĕрсе тăкнă. Тăшмансен йулашкисене, вăрăсене, сăтăрçăсене малашне те тĕп туса пымала.

Суту-илӳ ĕçĕнчи работниксен тĕп йышĕ—тӳрĕ ĕçлекен, халăхшăн тăрăшакан çынсем, вĕсене ĕçре пулăшса пымала. Çав вăхăтрах пĕтĕм общественнăçăн, профсойузсен, комсомолăн суту-илӳ организацисене тĕрĕслесе тăрса пулăшас ĕçе вăйлăрах туса пырас пулать.

Халăх тавар илни ӳссех пырать. Суту-илӳ ĕçне пирĕн çавна асра тытса сарса пымала. Сăмахран, 1938 çулхи II-мĕш квартăлта республикăри йалсенче çитцă тавраш 1600 пин тенкĕлĕх сутнă. III-мĕш квартăлта 3.315 пин тенкĕлĕх сутмала,—хуласенче сутни ку шута кĕмест-ха. Пирĕн йалсенче хаљхи вăхăтра сахăр тата кондитĕр таварĕсем нумай сутăнаççĕ, ĕлĕкхи вăхăтра çав таварсене йалта кулаксем, пупсем тата ытти йунĕçенсем çеç илме пултарнă.

Малашне суту-илӳ ĕçне тата ытларах лайăхлатса тата вăйлатса йама кирлĕ. Епĕр ку ĕçе çывăх вăхăтрах тăвапăр. Епĕ, суйлавçăсем те мана çак ĕçре пулăшасса шансах тăратăп.

тăшмансем тапăнасран сыхласа тăрать. Совет влаçĕ тăтăшах тĕплĕ шухăшлă мир политикне тытса пырать, империалиссен—вăрçă вутне чĕртекенсен хăтланăвĕсене тăрă шыв çине кăларать.

Совет халăхĕ пирĕн карательнăй оргăнсем шалти тăшмансемшĕн тата ытларах хăрушăскерсем пулччăр, пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕ тата вăйлăрах та хăватлăрах пулччăр, тăшмансем тем тусан та вăл пирĕншĕн кĕтмен çĕртен ан пултăр, тесе тăрăшать, — çавăнпа совет халăхĕ пурте пĕр шухăшлă пулса коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн сасăлать.

* * *

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокне пултарса пыракансем—пирĕн генилĕ çулпуçĕсем Ленин тата Сталин. Вĕсем пирĕн партийе партире тăман ĕççыннисемпе çыхăнăва йаланах çирĕплетсе пыма, социалисăмшăн кĕрешӳре вĕсем çине тайанма вĕрентнĕ.

„Коммунисла парти çеç, — вĕрентнĕ Ленин, — вăл чăннипех революцилĕ класăн авангарчĕ пулса тăрать пулсан, вăл хăйĕнче унăн чи лайăх представителĕсене пĕтĕçтерсе тăрать пулсан, вăл лайăх ăнланулă тата чĕререн парăннă, революцилĕ вăйлă кĕрешӳ опычĕпе çутта тухнă тата пиçĕхнĕ коммуниссенчен тăрать пулсан вăл парти хăйĕн класĕн пĕтĕм пурнăçĕпе, ун урлă тата експлоатаци тӳсекенсен пĕтĕм массипе уйăралми çыхăнма тата çав класпа массă куçĕ умĕнче тулли шанчăклă пулма пултарнă пулсан, — çавăн пек парти анчах пролетриата капиталисăмăн пĕтĕм вăйĕсене хирĕç ним хĕрхенӳсĕр, татăклă, йулашки кĕрешӳре йертсе пыма пултарать" [1]).

Сталин йулташ „Колхозник йулташсене панă" пурте пĕлсе тăракан ответра çапла çырнă: „Коммуниссем, партире тăманнисенчен çтенапа уйăрălса, хăйсен хуппи ăшне хупăнса ларас пулсан, вĕсем пĕтĕм ĕçе пĕтерсе хунă пулĕччĕç. Социалисăмшăн пынă кĕрешӳре коммуниссем мухтава тухма пултарнă, коммунисăм тăшманĕсене çĕмре-çĕмре тăкнă пулсан, вăл ĕнте коммуниссем, ытти ĕççемпе пĕрле, партире тăманнисем хушшинчи чи лайăх çынсене ĕçе хутшăнтарма пĕлнинчен, вĕсем партире тăманнисен йышла сийĕсем хушшинче вăйсем тупма пĕлнинчен, вĕсем хăйсен партийĕ тавра партире тăман йышлă актив пухăнтарма пĕлнинчен килнĕ" [2]).

Ленин тата Сталин, революцин аслă генийĕсем, парти членĕсене мăнкăмăлланасран, пуçа каçăртасран тата лăпланса ларасран йаланах сыхлантарнă. Вĕсем ĕнтĕ бољшевикăн йатне, коммунисла партин членĕн тивĕçлĕхне пит çӳле çĕкленĕ, партире тăман мĕлйунлă массăсем коммуниссен партине калама çук пысăккăн шанса тăмала тунă.

Çаксем вĕсем совет халăхĕн морально-политикăлă пĕрлĕхĕн çăлкуçĕ пулса тăнă, çак пĕрлĕхе пырса çапăнса тăшмансем епĕр малала кайассине чарса лартма тем тĕрлĕ хăтланнисем те арканса пынă, малашне те арканса пырĕç.

* * *

Совет халăхĕн пĕрлĕхĕнче никам çĕнтерейми улăпла хăват пур. Çав вăйа тăван çĕршывран инçетре пулнă чухне уйрăмах туйатăн. Анчах çав туйăм вăл хамăрăн аслă çĕршыври çынсемпе пĕрле чухне, вĕсен мухтавлă ĕçĕсемпе, вĕсем кĕрешсе тунă çĕнтерӳсемпе паллашнă чухне тата ытларах вăйланса кайать.

„Тăван совет çĕршывне таврăннă хыççăн епĕр, „Çурçĕр полюсĕ" станцинче хĕл каçнисем, кашнийех ССР Сойузĕ тăрăх çӳресе килме ĕлкĕртĕмĕр. Епĕ, Мускавпа Ленинградсăр пуçне, пĕтĕм Украинă тăрăх çӳрерĕм, Карелире хамăн суйлавçăсем патĕнче, Мурмăнскра, чикĕ çывăхĕнчи районсенче пултăм. Епĕ вуншар хапрăк-савăтсенче, шахтăсемпе рудниксенче, колхозсенче, çар чаçĕсенче, чикĕри заставăсенче пултăм, тĕрлĕрен професцилĕ çынсемпе хутшăнтăм. Епĕ стариксемпе комсомолĕцсен сăмахĕсене итлерĕм, вĕсем, пурте тăван çĕршыва хĕрӳлĕ йуратни çинчен, унăн çитĕнĕвĕсемшĕн хĕпĕртени çинчен, халăхăн, партин, хамăрăн правитĕлствăн, хамăрăн çулпуçĕсен вăйĕ çине шанса тăни çинчен калаççĕ. Пур çĕрте те халăх малала кайма, пĕлӳсен çĕнĕ çӳлĕшĕсене çĕнсе илме, тăван çĕршывăн пуйанлăхĕпе хăватне ӳсĕнтерсе тата çирĕплетсе пыма тăрăшать.

Совет халăхĕ пĕрлĕхлĕ, вăл пысăк хайарлăхпа тăшмансене—троцкисла-бухаринла тата буржуалă-националисла предателсемпе изменниксене, шпионсемпе диверсантсене ылханать. Пирĕн мухтавлă совет резведки, Сталинла Халăх Комиссарĕ—пĕтĕм халăх йуратакан Н. И. Йежов йертсе пынипе, халăх тăшманĕсене пĕрне хăвармиччен тупса тытса пĕтерĕ. Вĕсем совет çĕрĕ çинче пурăнаймĕç!

Епĕ çĕршыв тăрăх çӳренĕ чухне пур çĕрте те халăх тăван çĕршыва, бољшевиксен партине, Сталин йулташа вĕçĕмсĕр йуратнине куртăм. Иосиф Виссарионăвич Сталин йатне каласанах пурте хĕпĕртесе савăнаççĕ, мĕншĕн тесен Сталин йулташ—вăл пирĕн çĕнтерӳсемпе çитĕнӳсен символĕ.

* * *

Влаçра тăракан парти халăхăн пĕтĕм массипе суйлав блокĕ туни пирĕн çĕршывра çеç пулма пултарать. Буржуалă çĕршывра хăшĕнче те пулин çавăн пек задачă лартма пулассине тавçăрса илме те çук. „Çук, ун пек задачă,—тенĕ Молăтăв йулташ,—буржуалă государствăри пĕр парти те ăна пурнăçа кĕртме вăй çитерес çукскер. Унта, капиталисăм çĕршывĕсенче, пурпĕрех класлă кĕрешӳ çĕмĕрекен çĕрте, ун çинчен ĕмĕтленме те çук. Çавна тума буржуалă партин пĕрин те вăйĕ çитес çук."

Коммуниссемпе партире тăманнисен блокĕ 1937 çулти декабĕрте—ССР Сойузĕн Верховнăй Совет суйлавĕнче—пĕтĕм тĕнче умĕнче историлĕ çĕнтерӳ турĕ. Иккĕленмели çук, çак никам çĕнтерейми блок 1938 çулти ийуњре—сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсен суйлавĕнче—тата чаплăрах çĕнтерӳ тăвĕ. Грузири тата Арменири суйлавсем—çав çĕнтерӳ пулассине систерсе тăраççĕ.

Хăйĕн çĕршывĕн тытăм ĕçĕсене туса пыма кама шанмалине совет çыннисем лайăх пĕлсе тăраççĕ. Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене депутата суйламали кандидатсем, халăх пухăвĕнче палăртнăскерсем,—çак çынсем халахăн пĕтĕм пурнăçĕпе уйăралми çыхăнса тăраканскерсем. Вĕсем çĕршывăн чи лайăх та чи тивĕçлĕ çыннисем,—вĕсем кашни хăйĕн ĕçĕнче ĕçри паттăрлăха, социалисăм ĕçĕнче пĕтĕм чĕререн тăрăшса ĕçленине кăтартса пыраççĕ. Сойузлă тата автономлă республикăсен Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама кандидатсем палăртнă чухне, халăх Сталин йулташ Мускаври Сталинский суйлав округĕнчи суйлавçăсен 1937 çулти декабĕрĕн 11-мĕшĕнче пулнă пухăвĕнче каланă сăмахне асра тытнă. Çав чаплă сăмахĕнче Сталин йулташ суйлавçăсене Верховнăй Совет депутачĕ—вăл халăх тарçи пулса тăрать, тесе вĕстутарчĕ. Верховнăй Совет депутачĕ йаланах Ленин сăнарлĕ политикăлă дейателĕ пулмала, политикăла обыватĕл картне унăн нихçан та анмала мар. Совет халăхĕн депутачĕн куçĕ умĕнче, унăн чĕринче йаланах Ленинăн аслă образĕ пулмала—кĕрешӳре хăравсăр пулмала; халăх тăшманĕсене нихçан та каçармала мар; ĕçсем йăвăр килсен йе хăрушлăх пулсан нихçан та çухалса каймала мар; пысăк ыйтусене татса панă чухне аслă та васкусăр пулмала, йаланах чăнлăхла тата тӳрĕ пулмала; халăха йаланах йуратмала.

Республикăсен Верховнăй Совечĕсене депутата суйлама тăратнă кандидатсем—совет влаçĕ çулĕсенче ӳснĕ, парти тата совет влаçĕ пăхса ӳстернĕ чи лайăх çынсем. Коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсен спискинче хапрăк-савăтсенчи стахановецсем, чи лайăх трактăриссемпе комбайнерсем, партири тата партире тăман совет работникĕсем, аслăлăх дейателĕсем, писателсем, артиссем, педагогсем, врачсем, агрономсем, Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн бойецĕсемпе командирĕсем тата политработниксем, наркомвнуделецсем пур.

Кашни республикă кандидачĕсен спискинче—халăхăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсем.

Кашни сойузлă республикă кандидачĕсен спискинче чи малта социалисăмлă Конституци туса паракан, социалисăмăн аслă рулевойĕн—Сталин йулташăн йачĕ.

Хаваслă çакăн пек кандидатсемшĕн сасăлама! Партире тăманнисемпе коммуниссен блокне никам та çĕнтереймĕ, мĕншĕн тесен вăл пирĕн халăх—аслă, пĕрлĕхлĕ те пĕтĕçӳлĕ халăх. Коммуниссемпе партире тăманнисен сталинла блок кандидачĕсемшĕн сасăласа, суйлавçăсем хăйсен сассисене тăван çĕршыв малала чечекленсе пырассишĕн, демократишĕн, миршăн, социалисăмлă прогресшĕн, халăхсен телейĕшĕн, коммунисăм пĕтĕм тĕнчипе çĕнтерессишĕн параççĕ.

[1]) В. И. Ленин. Сочинения, Том XXV. Стр. 315.
[2]) И. Сталин. „Вопросы ленинизма". Стр. 343—344.

Халăхсен праçникĕ

(Йулашки. Пуçламăшĕ 1-мĕш страницăра)

Узбек СС Республикĕ

Кăнтăрла Ташкентри радиостанци суйлав кунĕ тĕлне Тбилисинчен тата Алма-Атаран илнĕ тăванлă саламсем çинчен пĕлтернĕ. Грузи К(б)П Тĕпкомĕ, Грузи Тĕпçĕставкомĕпе Халăх Комиссарĕсен Совечĕ, Казахстан К(б)П Тĕпкомĕпе Тĕпçĕставкомĕ Узбек халăхне аслă праçник йачĕпе сывлăх сунса саламлаççĕ.

Ташкентски—Ленински суйлав округĕнче, аслă çулпуç Сталин йулташ депутата суйланма килĕшу панă çĕрте, суйлавсем калама çук пысăк çĕкленупе иртнĕ. Ĕççыннисем хăйсен сасĕсене Узбек СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйлама тăратнă пĕрремĕш кандидатшăн пама участкăсене пĕр çемйе пек кар тăрса пынă.

Сталинăн çывăх соратникĕн Молăтăв йулташ кандидатурине регистрациленĕ округ Сталин йулташ йачĕпе хисепленсе тăрать.

Совет правитĕлстви пуçлăхĕшĕн пуринчен те малтан сасăлама пиравăр комбинатĕнчи паллă стаханăвкăна ССР Сойузĕн Верховнăй Совет депутатне Абдурахманăвă йулташа телей тивнĕ.

Ташкентски—Куйбышĕвски суйлав округĕнче, Л. М. Каганович йулташ депутата суйланма килĕшу панă çĕрте, суйлавсем политикăлă пысăк активлăхпа иртнĕ.

Таджик СС Республикĕ

Пĕтĕм халăхсен хавасла праçникĕ çитсе тăчĕ, Таджик халăхĕ çав праçнике тĕлĕнмеле пысăк çĕкленупе те хавхаланупа хатĕрленнĕ.

Столинабад хулинчи Сталински суйлав округĕнчи 1-мĕш номĕрлĕ участкăн суйлав комиççийĕн сĕтелĕ умне чи малтан, алла чечек çыххи тытса, пурçăн хапрăкĕнчи стаханăвкă Турсунбайĕвă пырса тăнă. Конвертпе бÿллетен илсе, вăл суйлав йешчĕкĕ патне пырать.

— Çакă вăл манăн пурнăçăмра чи телейлĕ кун пулса тăрать, — тесе каланă вăл. — Хамăн сасăма епĕ пире хавасла та телейлĕ пурнăç туса параканшăн, халăхсен çулпуçĕшĕн Сталин йулташшăн патăм.

Инçетри совет Памирĕнче (Хорогски суйлав округĕ) пурăнакан халăхсем хăйсен гражданла тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме, сасăсене коммуниссемпе партире тăманнисен блок кандидачĕсемшĕн пама пĕрин хыççăн тепри суйлав урнисем патне пыраççĕ.

Туркмен СС Республикĕ

Суйлавçăсенчен нумайĕшĕсем, Туркмени столицинчи — Ашхабад хулинчи Ленински суйлав округĕ тăрăх депутата суйланма килĕшу панă пĕтĕм халăх кандидачĕшĕн — Сталин йулташшăн хăйсен сасĕсене пуринчен малтан парас тесе, суйлав участкисене суйлавсем пуçланиччен йылай малтан пынă.

Марă хулинчи Комсомољски суйлав округĕнче суйлавсем организациленĕ, пысăк хаваслăхпа иртнĕ, унта Туркмен СС Республĕкĕн Верховнăй оргăнне депутата суйлама кандидата аслă Сталинăн соратникне — Совет Сойузĕн пĕрремĕш Маршăлне, Оборона Халăх Комиссарне Ворошилăв йулташа регистрациленĕ.

Казах СС Республикĕ

Совет Казахстанĕн столици йаланхинчен ирех вăраннă. Капăр тумланнă суйлавçăсем праçник чухнехи пек тасатса илемлетнĕ урамсем тăрăх пыма пуçланă вăхăтра Ала-Тау тăвĕсем çинчен çĕрлехи сулхăн сывлăшсем килме те чарăнман пулнă-ха. Уйрăмăнах Сталински суйлав округĕнче пысăк хускану пулнă, мĕншĕн тесен унта Казах СС Республикĕн Верховнăй Советне депутата суйланма халăхсен аслă çулпуçĕ Сталин йулташ килĕшу панă.

Ирхине шăп 6 сехетре, суйлавçăсем йышлăн пынă çĕре, суйлав участкисен алăкĕсем йарах уçă пулнă. Суйлавсем пуçланнă.

Суйлавçăсем суйлав йешчĕкĕсем патне вĕçĕ-хĕррисĕр пыраççĕ. Кашнийех хăйĕн сасне тăван та йуратнă Сталиншăн пама васкать.

Халăх массисен тĕлĕнмеле çĕкленĕвĕпе хавхаланăвĕ çинчен пĕлтерекен хыпарсем Казах республикĕн пур кĕтесĕсенчен те килеççĕ.

Çемипалатинскăра пăрахутсем йусакан савăтри стаханăвĕцсем Бахновецпа Русоков суйлав кунне çĕнĕ рекордпа паллă тунă. Суйлав кунĕ умĕн, çĕнĕрен тунă пăрахутăн машинĕсене монтаж туса вырнаçтарса, вĕсем нормăна 757 процент тултарнă. Пайан Бахновецпа Русоков Çемипалатински—Йежовски суйлав округĕнчи виççĕмĕш участкăна пуринчен те малтан пынă, унта Сталин йулташăн шанчăклă соратникне Николай Иванăвич Йежова суйлаççĕ.

Суйлавсем колхозлă йалта та пысăк çĕкленупе иртнĕ. Чапа тухнă халăх поечĕ — Джамбул депутата суйланма килĕшу панă суйлав округĕнчи колхозниксем унăн Казах республĕкĕнчи суйлавçăсене хисеплесе çырнă йуррине йурлаççĕ.

(ТАСС).



Мускаври Горький йачĕпе тăракан куљтурăпа кану паркĕнче
Фото Б. Фишманăн (Сойузфото).

Суйлава ăнăçлăн иртеретпĕр

Шупашкар хулинчи 5-мĕш участкăри суйлав комиççи, ийунĕн 26-мĕш кунĕнче, ирхине 6 сехетрен пуçласа, РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсен суйлавне иртерме хатĕрленсе çитрĕ.

Комиççи членĕсем суйлав кунĕнче камăн мĕн тумалине, ăçта ĕçлемелине пĕлеççĕ. Кунсăр пуçне суйлавçăсене кĕтсе илме, вĕсен ирĕк вăхăтне ăнăçлăн иртерме, пĕлмен ыйтусене ăнлантарса пама, тĕрлĕ çыхăну тытма 32 активиса хутшăнтарнă. Суйлав комиççин виçĕ телефон пур, вĕсем патĕнче татти-сыпписĕр дежурнăйсем тăраççĕ. Хула совечĕ виçĕ çăмăл автомашинă çирĕплетсе панă. Весемпе ватă çынсене, хăйсем тĕллĕн суйлав çуртне пыма пултарайман тата пит те çамрăк ачалă суйлавçăсане суйлав çуртне илсе пыратпăр, киле ăсататпăр. Суйлав комиççине урам комитечĕсем хĕрÿлĕ пулăшаççĕ. Вĕсем активиссене 10—20 кил çумне çирĕплетнĕ, суйлав çуртĕнче татти-сыпписĕр дежурнăй пулма çынсене уйăрнă.

Суйлав комиççи çуртĕнче ачасем ваљљи тата пĕрремĕш пулăшу памали пÿлĕмсем, чей ĕçме тата вĕри апат çиме буфет тунă. Вăхăта канăçлă тата куљтурăлă иртерме суйлавçăсем ваљљи икĕ пÿлĕм уйăрса панă, унта кĕнекесем, хаçат-журналсем, шашкăшахмăт, домино, патефон, музыкă инструменчĕсем, киоск. Волейбол вăййи выљама площадкă тунă.

Пирĕн участкăри суйлавçăсем сасăлама Чăвашторг çуртне пыраççĕ. Суйлавçăсем ваљљи 11 кабинă тунă, унта ирĕк, çутă, таса. Çекретариатра ĕçлеме комиççин виçĕ членне уйăрнă, комиççи членĕсене пулăшма виçĕ активиса çирĕплетнĕ. Çекретариатра ĕçлекен йулташсене суйлавçăсен спискине алфавит тăрăх валеççе панă.

Çак пысăк та чаплă ĕçе, ĕççыннисен пысăкран та пысăк уйавне ăнăçлăн иртерĕпĕр.

Шупашкар хулинчи 5-мĕш участкăри суйлав комиççи çекретарĕ М. Йакимăв.

Производствăри пысăк çĕкленÿ

КАНАШ, ийунĕн 24-мĕш (хамăр корр.). Канашри вакунсем йусакан савăтра, Верховнăй Советсен суйлавне хатĕрленнĕ май, социалисăмлă ăмăрту анлăн сарăлчĕ. Канаш хула суйлав округĕ тăрăх ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Назарăв йулташ йертсе пыракан тимĕрç цехĕ çур-çул программинĕ ийунĕн 23-мĕшĕ тĕлне 110 процент тултарнă.

Канаш суйлав округĕ тăрăх РСФСР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Антонăвă йулташ ĕçлекен йăвăç каскалакан цехри рабочисем çур çул программине ийунĕн 25-мĕшнĕ тултарассишĕн кĕрешеççĕ.

Савăтри стаханăвĕцсем калама çук пысăк тухăçлă ĕçлеççĕ. Урапа цехĕнчи стаханăвĕцсем ийунĕн 23-мĕшĕнче пĕр кунхи нормăна çакăн чухлĕ тултарчĕç: Бухталăв—441 проц., В. Иванов—328 проц., Бăдердинăв—270 проц., Блохин—250—проц., т. ыт. те.

КУСЛАВККА, ийунĕн 25 мĕшĕ. (Телефон тăрăх, хамăр корр.). Çург-йĕрсем тăвакан комбинат йулашки вăхăтра паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеме пуçларĕ. Плана тултарса ĕçлеймен рабочисем халљхи вăхăтра хăйсен кулленхи нормисене ытлашшипех тултараççĕ.

Йăвăç цехĕ РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали куна йулашки 5 кунлăх плана 200 процент тултарнипе кĕтсе илчĕ. Ку цехра ЧАССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат Фирсăвă йулташ татах пысăк çитĕнÿ турĕ, вăл плана 240 процент тултарчĕ.

ССРС Верховнăй Совет депутачĕ Цыганова йулташ ĕçлекен хăма çуракан цех та йулашки пилĕккунлăх плана 119 процент тултарчĕ.

Сушиљнăй, механически цехсем те паха тĕслĕхсем кăтартса ĕçлеççĕ, пурте вĕсем РСФСР тата ЧАССР Верховнăй Совечĕсене суйламали куна производствăра çĕнĕ çитĕнÿ тунипе кĕтсе илчĕç. Ç. Йалавин.

Чăваш республикĕн чиккисем тăрăх—велоçипедсемпе

Пуçламĕш тата вăтам шкулсенче ĕçлекен работниксен сойузĕ пуçарнипе, РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсене суйлама хатĕрленнĕ йатпа велочупу организациленĕ. Çак велочупу команди 20 кун хушшинче Чăваш республикĕн чиккисем тăрăх велоçипедсемпе 1.460 километр чупса çаврăнмала.

Командăра 6 учитĕл. Ийунĕн 16-мĕшĕнче епĕр Турхантан тухса Шăмăршăна çул тытрăмăр. Шăмăршă районĕнчи Виçпÿрт Шăмăршăра, Кĕçен Пуйанкассинче, Палтай йалĕнче пулса, унта митинг туса иртертĕмĕр. Чăваш АССР Верховнăй Советне депутата суйлама палăртнă кандидат И. Воронцовă йулташ митингра сăмах тухса каларĕ.

Ийунĕн 17-мĕшĕнче Йелчĕкре пысăк митинг пулчĕ. Митингра парти райком çекретарĕ Çтепанăвă й. сăмах каларĕ. Велочупу командинчи йулташсем совет государствин суйлав саккунĕ çинчен ăнлантарса пачĕç.

Велочупу командине Куславккара та, Сĕнтĕрвăрринче те пит ăшшăн кĕтсе илчĕç. Кунта епĕр хăйсен суйлав округĕсенче регистрацлиленĕ кандидатсем çинчен агитацилерĕмĕр.

Çичĕ кун хушшинче 600 километр ытла чупрăмăр. Çул çинче массăлă ăнлантару ĕçне туса пыратпăр. Уй-хирте ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсене пĕр çĕре пухатпăр та, вĕсене Верховнăй Советсен суйлавĕсем çинчен ăнлантаратпăр, Чăваш республикĕн 18 çул хушшинчи çитĕнĕвĕсем çинчен каласа паратпăр.

Командăри йулташсен сывлăхĕ лайăх, пурте хавасла.

Хамăр задачăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртессе çирĕп шанатпăр. Ийулĕн 5-мĕшне—велочупу финишне—пысăк çитĕнÿсемпе çитме хатĕрленетпĕр.

Велочупу командорĕ И. Мйасников.

Çамрăк суйлавçăсем

Епĕ Вăрмар районĕнчи Аслă Чак йалĕнчи Сталин саманинче çуралнă çамрăк. ССР Сойузĕн Верховнăй Советне суйлама хатĕрленнĕ вăхăтра агитатăр пулса ĕçлерĕм. Хам çумма çирĕплетнĕ 10 хуçалăхри суйлавçăсене Сталинла Конституципе суйлав саккунĕ çинчен тата суйлама тăратнă кандидатсем çинчен лайăх ăнлантартăм.

Епĕ комсомол активĕпе тачă çыхăнса ĕçленĕ. Лайăх ĕçленине кура, мана комсомол ретĕнчен парти кандидатне куçарчĕç. Халĕ епĕ Чупай суйлав окугĕн комиççи членĕ.

Аслă Чак суйлав участкинче çамрăк суйлавçăсем 18 çын шутланаççĕ. Çак çамрăк суйлавçăсемпе кашни ернере пĕрре ыйтусемпе ответсен вечĕрĕсем туса иртеретпĕр. Аслă Чак суйлав участкине кĕрекен йалсенче пурĕ 24 агитатăр ĕçлеççĕ.

Чупай округĕнчи суйлав комиççи членĕ В. Андрийанăв.

Уйав тумĕпе тумланчĕ

ШАКАЛТИ (Шупашкар р.) суйлав участки суйлава хатĕрленсе çитрĕ. Вăрттăн сасăламали пÿлĕмсене тунă.

Йал праçник тумĕпе тумланчĕ. Ийунĕн 23-мĕшĕнче суйлавçăсен килĕсем çумне йалавсем çакрĕç, урамсене шăлса тасатрĕç. Йалта пур урамсенче те суйлавçăсене пурне те суйлава пыма чĕнекен лозунгсемпе плакатсем çакăнса тăраççĕ. Ив. Моççейĕв.

Шупашкар ĕççыннисен митингĕ

Савăнăçлă та пысăк хастарлăхпа иртрĕ Шупашкар хулинчи ĕççыннисен РСФСР тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕсен суйлавĕ йачĕпе ийунĕн 24-мĕшĕнче пулнă митингĕ.

Пилĕк сехет иртсенех колоннăсем строитĕлсен сатне пухăнма пуçларĕç. Чăсах сатра хуткупăс сасси йанрама пуçларĕ. Çĕнĕрен тунă сценă умĕнче тăракан нумай халăх хушшинче ташă, йурă пуçланчĕ. Ташлаççĕ, йурлаççĕ — çамрăк суйлавçĕсем, ташлаççĕ, йурлаççĕ — ватă суйлавçăсем, савăнаççĕ ачасем, савăнаççĕ рабочисем, техниксем, служăчисем, студентсем...

Митинг уçăлать. Трибунă çине Водопйанăв йачĕне тăракан тирсăран савăтĕнчи стаханăвкă Морковкинă йулташ тухать.

— Епĕр, тир-сăран савăтĕнчи рабочисемпе инженерлă-техниклă работниксем, суйлав кунне илнĕ обйазатĕлствăна пурнăçа кĕртнипе кĕтсе илетпĕр.

Медицинă работникĕсен йачĕпе Николайĕв йулташ тата доверĕннăйсем Петровăпа Сучковă йулташсем тухса каларĕç.

Митингра Лăпкă тинĕс флочĕн краснофлотĕцĕ Антонăв йулташ тухса каларĕ. Вăл Шупашкар ĕççыннисене краснофлотĕцсен йачĕпе хĕрÿлĕн саламласа, Совет Сойузĕн тинĕс чиккисене шанчăклă та çирĕп, тăшмансене кирек хăçан та тивĕçлĕ ответ пама хатĕр тăракан вăйлă тинĕс флочĕ сыхлани çинчен каласа пачĕ.

Чемберлен политикипе килĕшмеççĕ

Общинăсен палатинчи пренисем

ЛОНДОН, ийунĕн 23-ш. (ТАСС). Чемберлен общинăсен палатинче тухса каласан тепĕр куннех интервентсен самољочĕсем тепĕр хут бомбăсем пăрахса, Англин темиçе пăрахутне шыва путарнă. Оппозици ыйтнипе, пайан общинăсен палатинче ĕнер Италипе Германи интервенчĕсен самољочĕсем Англи пăрахучĕсем çине пиратла бомбăсем пăрахнă ыйту тăрăх пренисем пынă.

Лейбориссен оппозицин представителĕсемпе пĕрлех Ллойд Джорджпа консерватăр Сендис та правитĕлствăна пит хыттăн критикленĕ.

Италипе Германи авиацийĕ Англи пăрахучĕсем çине бомбăсем пăрахса варвăрла тапăннă пирки панă ыйтусене хирĕç Чемберлен çапла ответленĕ: Англи правитĕлстви „Торпенес“ тата „Сунион“ пăрахутсем çине бомбăсем мĕн пирки пăрахнине çийĕнчех ăнлантарса пама ыйтрĕ,—тенĕ.

Пренисенче тухса каланă Сендис консерватăр çапла каланă: „Çак саккунлă мар тапăнусене хирĕç Англи отпор пама пултарайманни агрессăрсене Испанире кăна мар, тата пĕтĕм тĕнчипех çавăн пек ирсĕр ĕççене тума хавхалантарнине Чемберлен ăнланса илеймест-ши—вара?“ Ăна хирĕç Чемберлен: правитĕлствă политики çинчен епĕ палатăра тĕплĕн ăнлантарса патăм,—тесе ответленĕ.

Унтан лейбориссен оппозицийĕн лидерĕ Еттли тухса каланă, вăл çапла каланă: „Çак ирсĕр актсем Чемберлен тухса каланă сăмахсен резуљтачĕ пулни, çав сăмахсенче, тĕпрен илсен, Англи пăрахучĕсем çине бомбăсем пăрахма Чемберлен хăйех хушни правитĕлствăна паллă мар-ши вара?“—тенĕ. Еттли сăмахĕсене ответлесе, Чемберлен çапла каланă: ĕнер Англи пăрахучĕсем çине çавăн пек тапăннисем вăл пĕрремĕш хут çеç пулнăскер мар,—тенĕ.

Пренисенче тухса каланă Ллойд Джордж Чемберлентан çакна тĕплĕн каласа пама ыйтнă: вăл çав бомбардировщиксен хуçисене хирĕç протеслет-ши йе Франко генерал правитĕлствине çырусем йанипех лăпланĕ-ши, мĕншĕн тесен Англи пăрахучĕсем çине бомбăсем пăрахакан самољотсем Италипе Германи правитĕлствисен пулса тăраççĕ? Ллойд Джордж ыйтнине хирĕç ответлесе, Чемберлен çапла каланă: Ллйод Джордж çав самољотсем кăмăн пулса тăни çинчен,—Итали йе Германи правитĕлствин иккенне вăл пĕлмен пулать. Унăн шухăшĕпе, çав самољотсем Франко генералăн хĕçпăшаллă вăйĕсен пайĕ пулса тăраççĕ. Кун хыççăн Ллойд Джордж çапла ыйтнă: „Çав самољотсен пĕр пайĕ Итали правитĕлствин иккенне кăтартса паракан нумай фактсене Чемберлен илмен-ши вара? Чемберлен ун çинчен пĕлме кирлĕ“. „Çавăнпа та ĕнтĕ,—тесе каланă Ллойд Джордж,—епĕ ыйтатăп: Испанири пăлхавçăсене самољотсемпе љотчиксем йарса парса пулăшакан правитĕлствăсене хирĕç Чемберлен протест йама хатĕрленет-ши, йе вăл Франко правитĕлствине хирĕç протесленипех лăпланĕ-ши?“. Чемберлен çапла ответленĕ: вăл самољотсем Испанири пăлхавçăсемпе республикă çарĕсем патне йут государствăсенчен пырса тăракан хĕçпăшалсемпе ытти вăрçă материалĕсен категоринех кĕмеле,—тенĕ.

Чемберлен правитĕлстви фашисла интервентсем тĕлĕшне туса пыракан ĕçĕсене пайан Англири позицилĕ пичетре те хыттăн критиклесе çырнă.

Китайри вăрçă

Йанцзы шывĕ патĕнчи çапăçусем

Йапони çарĕсем Йанцзы йуханшывĕ тăрăх наступлени тума пуçланăранпа икĕ ерне ытла иртрĕ. Çак наступленине йапонĕцсем Хањкоуна çурçĕр тата çурçĕр-хĕвеланăç Китайпа çыхăнтарса тăракан Чженчжоу çине наступлени туни ăнăçлă пулман хыççăн тунă пулнă. Йанцзы шывĕ çине наступлени тума тесе йапонĕцсем унта 100 йахăн çар карапĕсем, пит нумай самољотсем илсе пынă.

Ањцин районне (Ањхуей провинцин столици) Йапони çарĕсене 60 пин салтак илсе пынă. Хањкоу çине наступлени тума йапонĕцсем чи лайăх вырăна Йанцзы шывне суйласа илнĕ.

Флот Йанцзы йуханшывĕ тăрăх наступлени туса пынипе пĕрлех, йапонĕцсем Ањцин патĕнчен хысалтан çаврăнса пырса Цйањшањ çине (Ањцинран хĕвеланăçнелле) наступлени туса пыраççĕ, унтан вара Тайху çине (Цйањшањрен кăнтăрала) наступлени тума шутлаççĕ.

Икĕ ерне хушши хыттăн вăрçни, сывлăшран бомбăсем массăлăн пăрахни тата Йанцзы шывĕ патĕнче нумай вырăнсенче темиçе хутчен десант антарни—йапонĕцсене нимĕнле татăклă резуљтатсем те паман. Йапони çарĕ, авиаципе флочĕ пурте пĕр вăхăтра вăрçаççĕ пулин те, Китай çарĕсен вĕсене хирĕç хыттăн тăрса вăрçас ирĕкне хуçма пултараймаççĕ. Йапони çарĕсене пысăк çухатусем кÿреççĕ. Йанцзы шывĕ патĕнчи çапăçусенче Йапонĕцсен çар карапĕсем вунна йахăн пĕтнĕ.

(ТАСС).

Йапони çĕнĕ провокаци тунă

БЛАГОВЕЩЧЕНСК, ийунĕн 24-мĕш. (ТАСС). Ийунĕн 8-мĕшĕнче Амур шывĕ хĕрринче Сергейĕвкă йалĕнчен тăварах виçĕ километрта пирĕн пограничниксем Манчжури шаландине (паромне) тытнă, ун çинче корейцăсемпе китайĕцсем 29 çын пулнă. Шаландăна тытнă самантра ун çинчи 8 çын пирĕн çыран хĕрне каçма та ĕлкĕрнĕ. Вĕсем хăйсене совет территорине диверçилĕ ĕçсем тăвас шутпа йанине йышăннă.

Çак ĕç çинчен илнĕ хыпар Инçет-Хĕвелтухăçĕнчи общĕствĕннăçа тарăхтарса йанă. Кунта çак черетлĕ провокацине Советпа Манчжури хушшинчи чикĕри лару-тăрăва йăвăрлатас тĕллевпе Манчжурире Йапони военшчини организациленĕ, — тесе шутлаççĕ.

Тăван çĕршыв чиккине çирĕп сыхлатпăр!

(Красноармейĕцсен çырăвĕ)

Епĕр, №-лĕ çар чаçĕнчи красноармейĕцсем, ийунĕн 8-мĕшĕнче „Чăваш Коммунĕ“ хаçат вуласа Шупашкар—Канаш хушшинчи чукунçула хывса пĕтерни çинчен пĕлтĕмĕр. Ку вăл пире питех те савăнтарать. Патша саманинче пусмăр айĕнче пурăннă чăваш халăхĕ хуçалăхпа куљтурă йенĕпе çулран çулах ÿссе пырать. Вăл ÿсĕмсемшĕн епĕр чи малтанах Ленин—Сталин партине тав тăватпăр. Ленин—Сталин партийĕ йертсе пынипе пирĕн чăваш халăхĕ куљтурăлă халăх пулса тăчĕ.

Епĕр чукунçул çинче ĕçлекен стаханăвĕцсене, стаханавкăсене тата пĕтĕм республикăри ĕçхалăхне чĕререн тав туса салам йаратпăр. Епĕр хамăр телейлĕ Совет çĕршывĕн чиккисене çирĕп сыхлама пулатпăр. Тăшмансем ан ăмсанчăр! Епĕр вĕсене çапса аркатма кирек хăçан та хатĕр!

Красноармейĕцсем: Н. Петров, А. Гурйанăв, Макçимăв, Матвейĕв, Александрăв.

Вăтам шкулсенчен вĕренсе тухакансен вечĕрĕ

Ийунĕн 23-мĕшĕнче Шупашкарти Пионерсен çуртĕнчи кăçалхи çул вăтам шкулсенчен вĕренсе тухнă çамрăксен вечĕрĕ пулса иртрĕ.

Вечĕр умĕнхи ларура хулари 2-мĕш №-лĕ шкул директăрĕ Данилăв тата 1-мĕш №-лĕ шкулăн вĕренÿ пайĕн пуçлăхĕ Николайĕв йулташсем шкулсенчен камсем вĕренсе тухни çинчен каласа пачĕç. Вĕсем хыççăн кăçал 10-мĕш класран отличнă вĕренсе тухнă Ира Мороз, Дуçă Туљаковă, Деветйĕв йулташсем çамрăксене вĕренме уçă çул панăшăн партине тата Сталин йулташа тав туса хĕрÿлĕ сăмахсем каларĕç. Вăтам шкулран вĕренсе тухакансене ПСÇЛКС обкомĕн вĕренекен çамрăксен пайĕн пуçлăхĕ Р. Çмирнов тата ПСÇЛКС хула комитет çекретарĕн замеçтителĕ Тараскинă йулташсем саламларĕç.

Лару хыççăн Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Шĕнерпуç шкулĕнчен килнĕ Патрик йулташ йертсе пыракан хор йурăсем йурласа пачĕ, вĕсене хулари вĕренекенсем ăшшăн йышăнса илчĕç. Кайран ташăсем, вăйăсем пулчĕç.

А. Михайлăв.

Ответлă редактăр Н. М. СЕМЕНАВ.

Чăвашторгăн Шупашкарти уйрăмне йалан ĕçлеме

АСЛĂ БУХГАЛТĔР 1
БУХГАЛТĔРСЕМ 2
КАРТОТЕТЧИКСЕМ 2

кирлĕ

Чăвашторг кантурне пырса пĕлмеле йе телефон тăрăх № 1—47.

Шупашкарти Суту-илÿ уйрăмне

кирлĕ:

Ларйок пуçлăхĕсем,
Киоскăсенче илас сутакансем,
Столовăй тата буфет пуçлăхĕсем.

Вак таварсене алăран сутакансем, морожĕнăй сутакансем, столовăйсенче ĕçлеме официантсем тата магазинсенче ĕçлеме рабочисем те кирлĕ.

Адрĕс: Чебоксарское отделение Чувашторга, сектор кадров т. Павлову.

Шупашкарти Водопйанăв йачĕпе тăракан Тир-сăран савăчĕпе атă-пушмак хапрăкне ЙАЛАН ĔÇЛЕМЕ КИРЛĔ:

аслă бухгалтĕр,
бухгалтĕр-каљкуљатăр,
склад пуçлăхĕ

тата тир-сăран тунă çĕрте ĕçлеме рабочисем.

Чебоксарский Коммунально-Строительный техникум

ИЗВЕЩАЕТ,

что с 28 июня по 5 июля с-г. в помещении техникума (ул. Плеханова, 7) состоится публичная защита дипломных проектов студентами-дипломантами техникума в Государственной Квалификационной комиссии.

ДИРЕКЦИЯ.

Уполномоченный Чувашглавлита №313

Гор. Чебоксары, Типография № 1 Чувашполиграфтреста. Заказ № 500.